25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
АПРЕЛЬ
30
КĔÇНЕРНИКУН
100 (6035) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Оккупациленĕ совет районĕсенче Германи влаçĕсем çавтери усал, тискер тата пусмăрла ĕçсем туни çинчен тата çав преступленисемшĕн Германи правительствипе командованийĕ ответлă пулса тăни çинчен

ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ЯНĂ НОТА

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Совет Союзĕ дипломатиллĕ çыхăну тытса тăракан çĕршывсен посолĕсемпе посланникĕсем патне çакăн пек нота янă:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви хушнипе Сире çакăн çинчен пĕлтеретĕп:

Гитлерла захватчиксем хăйсем вăхăтлăха йышăнса тăнă е халĕ те йышăнса тăракан территорисем çинче пур çĕрте те, вĕсем нимĕнле преступленисем умĕнче те, нимĕнле хаярлăх тата пусмăрласси умĕнче те чарăнса тăмасăр, Совет халăхне çаратни çинчен тата тўрремĕнех пĕтерсе пыни çинчен калакан çĕнĕ те çĕнĕ материалсем Совет Правительстви аллине çаплах килсе тăраççĕ. Çав усал ĕçсем дисциплинăсăр уйрăм çар чаçĕсен, нимĕçсен уйрăм офицерĕсемпе салтакĕсен ăнсăртран тунă ĕçĕсем пулманни çинчен Совет Правительстви пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра Совет Правительствин аллинче нумаях пулмасть çапса аркатнă нимĕç чаçĕсен штабĕсенче тытса илнĕ документсем пур, çав документсенчен çакă курăнать: нимĕçсен фашистла çарĕ хăй тăвакан юнлă преступленисемпе тискерлĕхсене Германи правительствин тĕплĕн шухăшласа тата вак ыйтусем таранах палăртса çырнă планĕсем тăрăх тата Германи командованин çавăн пек приказĕсем тăрăх туса пырать.

Германи захватчикĕсен-империалисчĕсен çав планĕсемпе приказĕсенче çакăн пек тума палăртса хунă:

пирĕн çĕршывăн халăхне хуласенче те, ялсенче те пĕр çын хăвармасăр çаратса тухасси, совет граждăнĕсен хăйсен уйрăм пурлăхĕсене тата совет государствин харпăрлăхне тытса илсе Германие ăсатасси;

Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем пыра-пыра çапнипе гитлеровецсен тухса кайма тивнĕ хуласемпе ялсене **пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе** тăкасси;

Совет Государстви колхозсене ĕмĕрлĕхе тата пĕр тўлевсĕрех усă курма панă **çĕре тытса илсе** нимĕç оккупанчĕсен аллине парасси, тытса илнĕ çĕр çинче нимĕçсен «управляющийĕсене» тата Германи помещикĕсене вырăнаçтарса лартасси;

совет граждăнĕсене — хулари тата ялти çынсене — темиçешер миллион çынна Германие ирĕксĕр ĕçлеттермешкĕн **вăйпа илсе каясси;**

вырăссен нациллĕ культурине тата Совет Союзĕнчи халăхсен нациллĕ культурисене пĕтерсе лартасси, вырăссене, украинецсене, белоруссене, литовецсене, латышсене, эстонецсене тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсене ирĕксĕрлесе нимĕçлетесси;

совет граждăнĕсене, вĕсен национальноçне, социальнăй положенине, арçынне-хĕрарăмне тата миçе çултине пăхмасăрах, тискеррĕн пусмăрласа, асап кăтартса тата асаплантарса вĕлерсе, **совет халăхне пĕтерсе хурасси.**

Çакăн пек усал плансем хатĕрлесе çĕмĕрсе кĕчĕç пирĕн çĕршыва нимĕçсен фашистла кĕтĕвĕсем. Гитлерăн çак вăрă-хурахла планĕсем Германи çар командованийĕн нитех те нумай приказĕсенче палăрса тăраççĕ.

Совет хулисемпе ялĕсене, районĕсемпе облаçĕсене хаяррăн çапăçса пĕрин хыççăн тепĕрне ирĕке кăларса пыракан Хĕрлĕ Çарăн ĕçĕсем çак чăннипех те хăрушă картинăна кăтартса пачĕç: Гитлерпа Герингăн тата хальхи Германин влаçа хĕсĕнсе кĕрсе кайнă ытти правителĕсен маларах кăтартнă ирсĕр планĕсене нимĕçсен фашистла çарĕ утăм хыççăн утăм туса, халиччен пулманилтмен хаярлăхпа пурнăçа кĕртсе пырать.

Çак нотăна ярса, Совет Правительстви мĕнпур халăхсене çĕнĕ документсемпе фактсем çинчен, хăйĕн аллинчи йышлă документсемпе фактсенчен илнĕскерсем çинчен, пĕлтерет; вĕсем СССР Правительствин 1941 çулти ноябрĕн 25-мĕшĕнче тата 1942 çулти январĕн 6-мĕшĕнче янă нотисенче кăтартнă усал ĕçсем чăнах та план тăрăх пулса пынине кăтартса параççĕ çеç мар, вĕсем тата гитлерла правительсемпе вĕсене пулăшакансем совет халăхĕсен ирĕклĕхе, культури çине тата пĕтĕм пурнăçĕ çине те юнлă ирсĕрлĕхпе тапăнса, хаярлăхăн тата мораль тĕлĕшпе пăсăлса кайнин вĕçнех çитнине кăтартса параççĕ.

I

Халăха çаратни

Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем «Германи империйĕн рейхсмаршалĕ» Геринг çырнă секретлă документа тытса илнĕ, çав документăн ячĕ çапла: «Хĕвелтухăçĕнчи **çĕнĕрен оккупациленĕ** облаçсенче экономикăна ертсе пымалли директивăсем (симĕс папка)». Çак секретлă документа, 28 страницăллăскере, темиçе пайран тата йышлă пунктсенчен тăраканскере, çакăн пек паллă туса пичетлесе кăларнă: «Берлин, 1941 çулти июнь». Гитлер правительствин çав «директивисене» (çакă вăл документ текстĕнчен курăнса тăрать) шăпах Германия Совет Союзĕ çине тапăнас умĕн пичетленĕ, вĕсене «çар руководствине тата çарпа экономика инстанцийĕсене Хĕвелтухăçĕнче йышăнса илмелли облаçсенче экономикăллă задачăсем мĕнле пулмалли çинчен пĕлтерме» пичетленĕ. Çав «директивăсенче» («симĕс папкăра») Совет Союзĕ çине тапăнас тĕлĕшпе Германи умĕнче тăракан пысăкрах задачăсене çакăн пек палăртса панă:

«Фюрерăн (Гитлерăн) приказĕсем тăрăх, оккупациленĕ облаçсемпе çийĕнчех тата туллин усă курмашкăн пур мерăсене те йышăнмалла. Германи валли продовольствипе нефть мĕн май килнĕ таран ытларах тупасси — çакă ĕнтĕ кампанин экономикăллă тĕп тĕллевĕ. Çавăнпа пĕрлех оккупациленĕ облаçсенчен Германи промышленноçĕ валли чĕртавар пулса тăракан ытти продуктсем те памалла... Чи пирвайхи задача вăл — Германи войскисем валли оккупациленĕ облаçсенчен продовольстви парса тăрас ĕçе часрах пурнăçласси пулса тăрать».

Çак документра намăса пĕлмесĕр çапла каласа хунă: «Оккупациленĕ облаçсене васкаса йĕркене кĕртмелле тата вĕсен экономикине ура çине тăратмалла тесе шухăшлани пачах та вырăнлă мар. Эпир ялхуçалăх продукчĕсемпе нефтĕн чылай пысăк резервĕсене тупнă облаçсенче çеç йĕрке тумалла. Ыттисенче... экономикăллă ĕç — тупнă запассемпе усă курасси çеç пулмалла». («Экономикăллă тĕп задачăсем» ятлă пайран, I-мĕшпе II-мĕш пунктсем).

Çак тĕнче историйĕнче халиччен пулман планра, гитлеровецсем пирĕн çĕршыва организованно çаратмашкăн малтанах хатĕрлесе хунă планра — мĕнпур чĕртавара, тупнă мĕнпур тавар фончĕсене Совет Союзĕнчен Германие илсе кайма тата граждăнла халăха пĕр çын хăвармасăр çаратма палăртса хунă:

«Пире кирлĕ чĕртавара, полуфабрикатсене тата хатĕр продукцие пĕтĕмпех приказсемпе, реквизицисемпе тата конфискацисемпе усă курса сутуилўрен туртса илмелле». «Платинăна, магние тата каучука çийĕнчех пуçтарса Германие ăсатмалла». («Чĕртаварсемпе тата тавар ресурсĕсемпе усă курасси» ятлă пайран, 1, Б тата В пунксем). «Фронт çывăхĕнчи вырăнта тата тылри облаçсенче палăртнă апат-çимĕçсем, ушкăнăн тата пĕччен усă курмалли япаласемпе тумтирсем чи малтан войскăсене пама çар хуçалăх пайĕсен аллине кĕреççĕ..., çав пайсем йышăнманнисем вара çарпа экономика инстанцийĕсем тăрăх малалла каяççĕ». («Войскăсене кирлĕ япаласене çĕршывăн ресурсĕсенчен парса тăрасси» ятлă пайран, 1 сыпăк, II пункт).

Çак вăрă-хурахла план тăрăх пирĕн хуласемпе ялсенче ирĕксĕрлесе ĕçлеттерес йĕрке тумалла пулнă, нимĕн хака та тăман хут укçасем кăлармалла пулнă, предприятисенче ĕçукçи тўлессине пăрахăçламалла пулнă; çав вăрă-хурахла плана пурнăçламашкăн ятарласа хăйне уйрăм аппарат тунă, вăл аппарат çинчен çав асăннă документра тĕплĕн каланă, вăл Германи çарĕн уйрăм йышши хĕçпăшаллă пайĕ пек пулса тăрать, унăн хăйĕн «хуçалăх командованийĕ», «экономикăллă штабĕсем», хăйĕн «разведки», «инспекцийĕсем», «çар чаçĕсем», «производство хатĕрĕсем пухакан отрядсем», «чĕртавар пухакан отрядсем», «çар агрономĕсем», «ялхуçалăх офицерĕсем» т. ыт. те пур.

Совет Правительстви çакна палăртса парать: пирĕн çĕршыва пĕтĕмпех çаратмалли çак плана гитлерла Германия Совет Союзне хирĕç вăрă-хурахла поход туса пирĕн территори çине килсе кĕриччченех хатĕрлесе пынă.

Совет Правительстви кунпа пĕрлех çакна палăртса парать: Германи çарĕпе тылне кирлĕ продовольствие, чĕртавара тата промышленность таварĕсене совет халăхĕ ĕçлесе пухнă ресурссенчен парса тăмалли вăрă-хурахла план, Совет Союзĕнче çав япаласене çăмăллăнах тупма пулать тесе шутлани енчен илсен, пĕтĕмĕшпех ăнăçсăр пулса тăчĕ. Гитлерпа Герингăн çав усал шухăшлă планне пурнăçлама пуринчен ытла совет граждăнĕсем — рабочисем, хресченсем, интеллигентсем, служащисем — хăйсен тăван çĕршывне вĕçĕ-хĕррисĕр юратса чунтан парăнни тата вĕсем ютçĕршыв захватчикĕсене çавтери курайманни чарса тăчĕ.

Анчах та, оккупантсем «оккупациленĕ облаçсемпе Германи валли çийĕнчех тата туллин усă курма», унпа «рейхсмаршалăн» планĕ тăрăх усă курма пултараймарĕç пулсан, Германин оккупациленĕ влаçĕсемпе çар командованийĕ хăйсем тытса илнĕ территорисем çинче пур çĕрте те граждăнла халăха намăса пĕлмесĕр тата ытларах çаратаççĕ, унăн темиçе çул хушшинче тўррĕн ĕçлесе пухнă пĕтĕм харпăрлăхне туртса илеççĕ.

Германи çарĕнчи генеральнăй штабăн оперативнăй пайĕн ятарласа çырнă 43.761/41-мĕш номерлĕ приказĕ çумне хушса хунинче çапла кăтартса панă:

«Йышăнса илнĕ облаçсенче халăхран ирĕксĕр туртса илсе, кирек мĕнле майпа та тумтир тупас пулать. Чи малтан, çăм перчаткăсемпе тир перчаткăсем, пальтосем, жилетсем, шарфсем, вата хурса çĕлетнĕ жилетсемпе брюкисем, сăран атăсемпе çăматăсем, тăлăсем туртса илес пулать».

Германин çапса аркатнă чылай чаçĕсен приказĕсенче Çурçĕрти Армейски группăн командованин 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче генерал-лейтенант Байер алă пуса салатнă 1-422/41-мĕш номерлĕ çак кăтартăвне илсе пичетленĕ:

«Вырăссен граждăнла халăхĕн çăматтисене, ача-пăча çăматтисене те, пурне те халех тытса илмелле. Çăмата тăхăнса çўреме е усрама юрамасть, унпа хĕçпăшала ирĕк памасăр йăтса çўренĕшĕн айăпланă пекех айăпламалла» (çакăншăн айăплисене, Германири инструкцисем тăрăх, персе пăрахаççĕ).

Нимĕç оккупанчĕсем мирлĕ совет çыннисене çаратнă чухне вĕлернисене, темиçе пин çынна вĕлернине Германи командованин çавăн пек приказĕсене пăхса ăнланас пулать ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă территорисем çинче ак çакăн пек фактсем пулман пунктсем сайра тĕл пулаççĕ: Мускав облаçĕнчи Мало-Ярославец районĕнчи Терентьево ялĕнчен каялла чакнă чухне нимĕçсем урам варринче 73 çулти хресчене Г. П. Юргова, 70 çулти А. Чибасовăна тата 12 çулти В. Сергеева тытса чарнă та вĕсен кĕрĕк пиншакĕсемпе çăматтисене хывса илнĕ, унтан вара персе вĕлернĕ.

Курск облаçĕпе Орел облаçĕн ирĕке кăларнă чылай пункчĕсенче ак çапла тума хушакан приказ тупнă.

«пурлăхсене. виçе тарасисене, михĕсене, тĕштырга, тăзара, краççина, бензина, лампăсене, каспрюльăсене, клеенкăсене, шторăсене, занавескăсене, ковёрсене, патефонсене, пластинкисемпе пĕрле, комендатурăна илсе пырса памалла. Çак приказа пăхăнманнисене персе вĕлерессĕ».

Нимĕçсен Старица хулинчи комендатури пĕлтĕрхи декабрĕн 11-мĕшĕнче панă распоряженире, персе пăрахассипе хăратса халăха хăйĕн мĕнпур пурлăхне пама хушаканнинче, çаксене те кăтартнă: матери, аялти кĕпе-йĕм, пир, сĕтел-пукан тавраш, тумтир, атă, ботинка, супăнь, тимĕр пайсем, тĕрлĕрен инструментсем тата хуçалăхри урăх материалсемпе ытти тĕрлĕ материалсем».

Мускав облаçĕнчи Истра хулинче оккупантсем елкăсене илемлетмелли ача-пăча теттисемпе вăййисене «конфискациленĕ». Шаховская станцинче вĕсем халăх ача-пăча кĕпи-йĕмĕсене, стена çине çакмалли сехетсене, самоварсене «парас» ĕçе организациленĕ. Халĕ те оккупантсен аллинче тăракан районсенче нимĕç войскисем пырса çитнĕренпе чарăнмасăр туса пынă çаратăва пула йăлтах чухăнланса юлнă халăха çаплах ухтарса, çаратса пурăнаççĕ. Граждăнла халăхсене, вăл шутра ачасене те, хĕрарăмсене те, старриксене те, выçлăха хăварма, вĕсенчен продовольствин юлашки запасĕсене те туртса илме, каялла чакнă чухне Германи çарĕ хăйпе пĕрле илсе кайма пултарайман продуктсене пурне те пĕтерсе хăварма Германи командованийĕ хăйĕн чаçĕсене хушать. Генерал-фельдмаршал фон Рейхенау 1941 çулти октябрĕн 10-мĕшĕнче çырса панă приказра, —вăл приказа образцовăй приказ вырăнне хурса тата Гитлер «çак приказа питĕ чаплă тесе йышăнчĕ» тесе калаçа, нимĕçсен пур чаçĕсене те салатнă,—халăха çаратма тата пĕтерме çакăн пек каласа хĕтĕртни пур: «Ытти халăхсемпе тыткăнри çынсене апат пани—кирлĕ мар гуманность пулса тăрать. Отечество хăй мĕнрен татăлса пурăнать... çавна салтакăн тăшмана валли хăвармалла мар», тенĕ унта.

Гитлерăн правительстви планне палăртса хунă вăрă-хурахла ĕçсем (çавăн пек майпа Германи командованийĕ хăйĕн çарĕпе тылне кирлĕ япаласем тупса парса тăрасшăн) пур çĕрте те сарăлнине çак фактсем палăртса параççĕ. Тула облаçĕн 35 районĕнче кăна оккупантсем совет граждăнĕсенчен 14.048 ĕне, 11.860 сысна, 28.459 сурăх, 213.678 чăх, хур тата кăвакал тытса илнĕ тата пыл хурчĕсене 25.465 семье пĕтерсе тăкнă. Смоленск облаçĕн Дзержинск районĕнчи 15 ялсовечĕ тăрăх кăна оккупантсем колхоз пурлăхĕнчен 2.554 лаша, 1.170 ĕне, 335 сысна, 5.710 чăх тытса илсе кайнă. Кунсăр пуçне тата колхозниксен хăйсен уйрăм пурлăхĕсенчен оккупантсем 2.027 ĕне, 2.138 сысна, 5.297 сурăх, 44.159 чăх, çавăн пекех тата 5.477 мăшăр çăматă, 2.439 кĕрĕк, 3.208 ăшă тутăр, 10.431 метр матери, 3.299 мăшăр арçын кĕпи-йĕмĕ, 815 мăшăр ача-пăча кĕпи-йĕмĕ, колхозăн тата колхозниксен ун чухне пулнă мĕнпур тыррине, какайне, пылне, пахча-çимĕçсене тата ытти продуктсене, ялхуçалăх инвентарьне, çĕвĕ çĕлемелли машинăсене, велосипедсене, çумра пулнă укçасене т. ыт. те туртса илнĕ.

Гитлер «рейхсмаршалĕн» «директивисем» те, Германин нумай çар чаçĕсен командованийĕсен приказĕсем те, унтан та ытларах —гитлеровецсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет территорийĕсенче тунă шутсăр нумай преступленисем те,—çаксем пурте ĕнтĕ хĕçпăшалланнă вăрă-хурахсен, çав мĕнпур усал ĕçсемшĕн пĕтĕмпех ответлă пулса тăракан ирсĕр гитлерла правительствăн приказĕ тăрăх пирĕн çĕршыва çĕмĕрсе кĕнĕскерсен, чăн-чăн сăн-сăпатне кăтартса параççĕ.

II

Хуласемпе ялсене çĕмĕрни

Германин фашистла çарĕ, хăйĕн верховнăй командованийĕ тўрремĕнех хушнă тăрăх, совет хулисемпе ялĕсене тытса илнĕ чухне тата хăй унта пурăннă чухне вĕсене калама çук хытă çĕмĕрет, совет граждăнĕсен çурчĕсене, шкулсене, больницăсене, музейсене, театрсене, клубсене, тĕрлĕ обществăллă çуртсене тата ытти çуртйĕрсене çунтарса ярать тата ытти майсемпе пĕтерет. Сăмахран, Германин 6-мĕш армине 1941 çулти октябрĕн 10-мĕшĕнче панă приказра çапла каланă:

«Войскăсен чаçĕсем тăмалли çуртсенче пушарсене сўнтерни çеç влаçсене интереслентерет, ыттисене..., вăл шутра çуртсене те, пĕтерсе тăкмалла».

Германи командованийĕ 1941 çулăн вĕçĕнче тата 1942 çулăн пуçламăшĕнче çакăн пек темиçе приказ та кăларнă; вĕсенче вăл Германи çарĕн чаçĕсене Хĕрлĕ Çар хĕснипе каялла чакса пынă чухне оккупациленĕ вырăнта юлакан япаласене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма хушать. Нимĕçсен каялла чакса пыракан фашистла çарĕ пиншер ялсене, нумай хуласен пĕтĕм кварталĕсене тата пĕтĕм хуласене те çунтарать, сирпĕнтерсе ярать, çĕрпе танлаштарса хурать. Совет хулисемпе ялĕсене организованно пĕтерсе пырасси нимĕç захватчикĕсен совет территорийĕнче туса пыракан ирсĕр ĕçĕсен хăйне уйрăм отраслĕ пулса тăчĕ; совет халăх пурăнакан пункчĕсене мĕнле майсемпе çĕмĕрмелли çинчен ятарласа инструкцисем çырнă тата Германи командованийĕ çав майсем çинчен тĕплĕн çырса приказсем кăларнă; çав ĕçе тума уйрăм отрядсем уйăрса хунă, вĕсене çав ирсĕр ĕçе тума вĕрентсе хатĕрленĕ.

Акă совет правительстви аллинчи йышлă фактсенчен хăшпĕрисем.

Германин 29?-мĕш дивизин 512-мĕш полкне 1941 çулти декабрĕн 10-мĕшĕнче панă приказра çав полк тăнă районра декабрĕн 10-мĕшпе 14-мĕш хушшинче пĕр ял хыççăн тепĕрне мĕнле пĕтерсе пымалли плана питĕ тĕплĕн, çичĕ страница пысăкăш çырса панă. Çав приказра, Германин пĕтĕм çарĕнче çыракан формăпа çырнăскерте, çапла каланă:

«Халăх пурăнакан пунктсене çĕмĕрме çапла хатĕрлемелле: а) вĕсене çĕмĕресси çинчен пĕлтериччен граждăнла халăх ăна пĕрре те ан систĕр; б) сасартăк, пĕрре çапсах, кăтартнă вăхăтра çĕмĕрмелле..., çĕмĕрме суйласа илнĕ кун, уйрăмах çĕмĕресси çинчен пĕлтернĕ хыççăн, çĕмĕрмелли пурнктран граждăнла çынсенчен никам та ытти çĕре ан кайтăр тесе питĕ хытă асăрхас пулать. Полк йышăнса тăракан хĕллехи хваттерсене лайăхлатас шутпа, килти япаласене, краççина, пăтасене, çатмасене, чўлмексене, лампăсене, тенкелсене, витресене, пăявсене, михĕсене; продовольствие илсе кайма тата выльăха хăваласа кайма ирĕк панă...»

Германин 98-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ 1941 çулти декабрĕн 24-мĕшĕнче çырнă приказра, çунтарса яма палăртнă 16 совет ялне кăтартса тухнă хыççăн, çапла каланă:

«Мĕнпур утта, улăма, продуктсене т. ыт. те çунтарса ямалла. Пурăнакан çуртсенчи кăмакасене пурне те ручной гранатăсемпе сирпĕнтерсе юрăйман кăлармалла, вĕсемпе урăх усă курмалла ан пултăр. Çак приказ кирек мĕн пулсан та противникăн аллине лекмелле мар».

Нимĕçсен фашистла çарĕ çак приказсене вĕçĕ-хĕррисĕр хаярлăхпа ĕçе кĕртсе пырать, ялсене тĕппипе çунтарса ярать, хуласенче пурăнмалли çуртсене сирпĕнтерсе ярать, вĕсенче çынсен ушкăнĕсене чĕррĕнех çунтарать, хăйсен тăванĕсене çунасран çăлма тата çунакан çуртсенчен тухма ĕлкĕреймен çынсене çăлма хăтланакансене персе вĕлерет, хăйсен пурлăхĕсен пĕр пайне те пулин çăлса хăварма хăтланакан çынсене вĕлерет. Нимĕç захватчикĕсем нумаях пулмасть хуçаланнă территори çинче çакăн пек районсем те пур: темиçе вуншар километр кайса та унта тĕрĕс-тĕкел тăрса юлнă çурта сайра кăна тĕл пулатăн. Совет Союзĕн çарпа граждăнла влаçĕсем тата вырăнти халăх Германи çарĕн çав преступленийĕсене кăтартса çырнă йышлă документсенчен ак çак акта илсе кăтартма пулать, унта гитлеровецсем çунтарса янă пилĕк ял çинчен çеç калаççĕ, анчах та вăл çавăн пек пиншер фактсене палăртса тăрать:

«Калинин облаçĕн Пеновски районĕнчи Занепреченски ялсоветне кĕрекен Занепречье ялĕнче 1942 çулти январĕн 11-мĕшĕнче çырнă акт:

1) 1941 çулти декабрĕн 12-мĕшпе, 13-мĕшĕсенче Занепреченски ялсоветне кĕрекен Никишки, Занепречье, Заречье, Городцы тата Маслово ялĕсенчен мĕнпур халăха икĕ сехет хушшинче хăваласа кăларса янă. Нимĕçсен салтакĕсем хуралласа пырса, çав ялсенче пурăннă çынсене районăн противник тытса илнĕ шаларахри пункчĕсене илсе кайнă; 2) çав кăтартнă ялсене тепĕр куннех пурне те çунтарса янă, Никишки ялĕнче вара 70 килрен 69 кил çунса кайнă, Занепречьере 50 килрен 39 кил, Заречьере 25 килрен 24 кил, Масловăра—69 килрен 68 кил, Городцыра—22 килĕ пурте çунса кайнă. Кунсăр пуçне халăх куçĕ умĕнчех Покровское ялне çунтарса янă, унта 42 килрен 12 кил çунса кайнă, çавăн пекех тата Аслă Ильинское ялне çунтарса янă, унта обществăллă икĕ çурт çунса кайнă; 3) Маслово ялĕнче хресчен Федор Антонович Морозов, унăн хĕрĕ Марья, çавăн пекех тата Галя Котова, Вера Кузнецова, Валя Покровская тата Лидия Иванова колхозницăсем хăйсен пурлăхĕсене çăлса хăварма хăтланнă, вĕсене нимĕç караулĕ тытнă та пĕр çурта хупса питĕрсе лартнă. Унтан çав çурт çине нимĕç салтакĕсем автоматсенчен пенĕ, гранатăсем ывăтнă, вара çунтарса янă. Пўрте питĕрсе лартнисем пурте вилнĕ, Лидия Иванова анчах, ăнсăртран подвала лексе, çăлăнса юлнă.

Алă пуснă: ялсоветĕн председателĕ Арсений Николаевич Зуев, колхоз правленийĕн председателĕ Иван Маркелович Маркелов, МТС трактор бригадин бригадирĕ Вера Сергеевна Павлова».

Германи командованийĕ совет халăх пурăнакан пункчĕсене çунтарма тата граждăнла халăха массăллăн пĕтерсе пыма ятарласа тунă отрядсем гитлерла çар чакса пынă чухне хăйсен юнлă ĕçĕсене професиллĕ преступниксем пек пĕр çўсенмесĕр тăваççĕ. Çапла, сăмахран, Ростов облаçĕнчи Аслă Крепинская ялĕнчен чакса каяс умĕн нимĕçсем çав ял урамĕсем тăрăх ятарласа вут-хăвар сапакан машинăсем янă, вĕсем вара 1.167 çурта пĕрин хыççăн тепĕрне çунтарса тухнă, чечеклесе ларакан пысăк яла ялкăшса выртакан вучах туса хунă, унта вара пурăнмалли çуртсем, больницăсем, шкулсем, обществăллă çуртсем çунса кайнă. Çавăн чухне автоматчиксем хăйсен çунакан çурчĕсем патне çывхаракан çынсене асăрхаттармасăрах пере-пере вĕлернĕ, хăшне-пĕрне çыхса пăрахса бензин сапнă та çунакан çуртсем çине ывăтнă.

Гитлерла аркатуçăсем—вут тĕртекенсем—мĕнтери нумай çĕмĕрсе тăкнине çак даннăйсем, ытти çавăн пек йышлă даннăйсенчен илнĕскерсем, кăтартса параççĕ:

Мускав облаçĕн оккупантсем йышăнса тăнă 23 районĕнче вĕсем 537 яла пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă, 928 ялăн пĕрер пайне çĕмĕрнĕ, ялсенчи пурăнмалли 38.423 пўрте тата хуласенче 5.140 çурта, 947 шкула (1.220 шкултан), 159 больницăна, 54 ача сачĕсемпе яслисене, 49 клуба, 66 пекарньăна, 109 столовăя, 788 магазина, 1.053 витене, 3.160 выльăх картишне, 13.610 амбарпа сарайне, 747 подсобнăй предприятие т. ыт. те пĕтĕмпех çĕмĕрнĕ. Тула облаçĕнчи 25 районра Германи çарĕ хăй тăнă вăхăт хушшинче 316 яла, хресченсен 19.161 çуртне, 299 шкула, 2950 авăна, амбара, витене, выльăх картишне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Вырăссен авалхи хули Старица ишĕлчĕк купи пулса юлнă. Унта больницăна, библиотекăна, театра, ача çуртне çĕмĕрсе тăкнă. Богородицкри 866 çуртран 534 çурта пĕтĕмпех çунтарса янă. Сталиногорскра пурăнмалли çуртсем тĕлĕшпе кăна 278 миллион тенкĕлĕх убытка пулнă. Калуга хулинче оккупантсем темиçе кун хушшинче хулана урам хыççăн урам çĕмĕрсе пынă. Вырăс облаçĕсенчи ытти вуншар хуласенче те, Украинăра, Белоруссире, Молдавире, Карело-Финн ССР-ĕнче те çавăн пекех çĕмĕрсе пынă.

Германи çарĕн командованийĕ совет халăх пурăнакан пункчĕсене тăтăшах çĕмĕрсе пымалли çинчен панă приказа Германин пĕтĕм çарĕ пĕлсе тăрать. Гитлерăн 1942 çулти январĕн 8-мĕшĕнче панă приказĕ те çавăн пекех:

«Фюрерăн Тĕп Хваттерĕ. 1942 çулти январĕн 8-мĕшĕ.

Фюрерăн (урăхла каласан, Гитлерăн) приказĕ:

Халăх пурăнакан кашни пунктра тытăнса тăмалла, пĕр утăм та каялла чакмалла мар, пĕр салтак юлмиччен, юлашки граната юлмиччен хўтĕленмелле; акă мĕн ыйтать халь пирĕнтен самант. Эпир йышăнса тăракан кашни пункта опорнăй пункт туса хумалла, ăна кирек те мĕнле пулсан та, противник аякран кайса иртсе кайсан та, памалла мар. Анчах çапах та çўлерех тăракан начальство панă приказ тăрăх çак пункта пăрахса хăварма тивсен, **унта пурне те нимĕн юлмиччен çунтарса ямалла, кăмакасене сирпĕнтерсе ямалла...**

Алă пуснă: Адольф Гитлер».

Аркатуçă Гитлер совет хулисемпе ялĕсене çĕмĕрни унăн çарĕн ĕçĕ пулса тăнине пĕтĕм халăх умĕнче йышăнма вăтанмарĕ. Хăйĕн 1942 çулти январĕн 30-мĕшĕнче каланă сăмахĕнче вăл çапла каланă: «Вырăссем ăçта тарса кĕрсе кайма пултарнă, ăçта вĕсем халăх пурăнакан пункта каллех йышăнса илнĕ—тĕмĕр тесе шутлаççĕ, унта халăх пурăнакан çав пунктсем çук ĕнтĕ: унта ванчăксен куписем кăна».

Çапла ĕнтĕ, Германи çарĕ хăй тытса илнĕ совет çĕрĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕшĕн, пурăнмалли тата ытти çуртсене, предприятисене, шкулсене, больницăсене, культурăллă учрежденисене тăтăшах çĕмĕрсе пынăшăн, çапла майпа Совет государствине тата уйрăм граждăнсене кўнĕ сиеншĕн гитлерла правительствăпа командовани тулли ответ тытмаллине пĕтĕмпех документсемпе кăтартса панă тесе шутламалла.

III.

ССР Союзĕн оккупациленĕ районĕсенче чуралла-крепостникла режим туса хуни тата граждăнла халăха тыткăна илсе кайни

Гитлерла правительсем тата çар командованийĕ хăйсем окупациленĕ территорисем çинче совет граждăнĕсене пурне те чуралантарас плана пурнăçа кĕртсе пыни çинчен, хуласемпе ялсенче пурне те ирĕксĕр ĕçлеттерес йĕрке туни çинчен тата пирĕн çĕршыври мирлĕ халăхăн темиçе миллион çыннине «тыткăна лекнĕ çар çыннисен» шутне кансăр кĕртсе ирĕксĕрлесех Германие илсе кайни çинчен калакан документсем Совет правительстви аллинче пур. Гитлеровецсем пирĕн çĕршыва чуралантарса колони туса хурасшăн.

Украинăпа Белоруссин оккупациленĕ районĕсенче нимĕçсем промышленноçри рабочисене ирĕксĕр ĕçлеттерес йĕрке тунă, вĕсене сывлăхшăн ытларах сиенлĕ ĕçсенче те 14—16-шар сехет хушши, нумай чухне шим тўлемесĕрех, хăшпĕр чухне мăшкăлласа питĕ сахал тўлесе ĕçлеттереççĕ. Çапла, сăмахран, Киевра тата Кривой Рогра рабочисене пурне те пĕр кунхи ĕçшĕн нумай чухне Германи маркин çурри чухлĕ çеç тўлеççĕ. Çав ĕç укçипе пурăнасси выçлăхпа вăраххăн вилассине пелтерет. Оккупациленĕ облаçсенчи промышленноçлă районсенче нумайĕшĕнче çулйĕрсем çинчи тата тиесе пушатас тĕлĕшри йывăр ĕçсенче, «ĕç колоннисенче» ирĕксĕр ĕçлеттересси яланлăх йĕрке пулса тăнă, «ĕç колоннисенче» ăста рабочисемпе, техниксемпе тата инженерсемпе хура ĕçре усă кураççĕ. Оккупациленĕ районсенчи промышленноçлă предприятисен пысăк пайĕ ĕçлемесĕр тăрать. Предприятисене чылайĕшне оккупантсем Германин капиталистла фирмисене параççĕ, çапла вара çав фирмăсем совет

(Малалли 2-мĕш страницăра)

Оккупациленĕ совет районĕсенче Германи влаçĕсем çавтери усал, тискер тата пусмăрла ĕçсем туни çинчен тата çав преступленисемшĕн Германи правительствипе командованийĕ ответлă пулса тăни çинчен

ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ЯНĂ НОТА

(Малалли)

халăхĕн харпăрлăхне хăйсен аллине илеççĕ, анчах яланхи пекех çав предприятисене ĕçе яма пултараймаççĕ. Нумай пулмасть Германи захватчикĕсемпе вĕсен Румынири тарçисем Молдави тата Украина территорийĕсем çинчи промышленность предприятийĕсене «сутасси» çинчен пĕлтернĕ, çакă вăл — ку предприятисене, вĕсен рабочийĕсемпе пĕрле, нимĕçсен е румынсен капиталисчĕн аллине парассине пĕлтерет, çав капиталист хак пирки çар командованийĕпе калаçса татăлать. Украинăра тата Белоруссире, çăннипе илсен, сутуилĕ тăвас ĕçе пĕтерсе лартнă, сайра хутра кăна питĕ хаклă хакпа килте тытхаламалли япаласене, вырăнти халăхран туртса илнĕскерсене, сутаççĕ. Днепропетровскра, Киевра тата Полтавăра уçнă нумай мар лавкасенче таварсене, ятарласа çакнă вывескăсенче кăтартнă пек, нимĕçсене кăна сутаççĕ. Германи командованийĕн инструкцийĕ тăрăх, «Германи империне кирлĕ таварсене аякалла ярасран сыхласа хăварас шутпа», базарсем тума чарнă.

«Хĕвелтухăçĕнчи облаçсенчи чи кирлĕ задачăсем çинчен» ятлă инструкцире, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем 1942 çулти мартра тытса илнĕскерĕнче, «Центрти фронтăн çарпа экономика инспекцийĕн» начальникĕ генерал-лейтенант Вейгант «çурма-вытă тата çурма-çаремас çынсен ĕçĕпе промышленность производствине ытлăнтарса пыма çуккине» йышăнать, вăл «укçа хакĕ йÿнелни тата таварсем çитменни вырăнти халăх Германи влаçĕсене шанмалла мар туннине», çавăнпа та «çапăçакан çарсен тылĕнче пулма тивĕçлĕ мар япала — оккупациленĕ облаçсен лăпкă пурнăçĕ пăсăлас хăрушлăх пулма пултарассине» йышăнать. Германи генералĕ çав документрах оккупациленĕ облаçсене «пирĕн хĕвелтухăçĕнчи колонисем» тесе калама хăюлăх çитерет.

Оккупациленĕ облаçсенче промышленность производстви пĕтĕмпех юхăнса кайни ĕçсĕр тăрса юлнисен йышне ÿстерсе яние йышăнса, Германи генералĕ Вейгант вырăс, украинец, белорусс тата ытти нацисен рабочийĕсене ирĕксĕрлесех Германие ярассине васкатма хушса çакăн пек кăтарту парать:

«Хĕвелтухăçĕнчи оккупациленĕ облаçсенчи сывлăхлă тата çирĕп çынсен пысăк резервĕсен шутĕнчен темиçе миллион вырăс рабочийĕсене Германие яни кăна ... ĕç вăйĕ çавтери нумай кирлине тивĕçтерес тĕлĕшпе вăраха яма çук ыйтăва татса пама пултарать, çавна тунипе Германире ĕç вăйĕсем çавтери çителĕксĕррине пĕтерсе лартма май килет». (Б. Б. (и) уйрăм группăна ятарласа панă 3-мĕш номерлĕ кăтарту, II-мĕш пункт).

Германи командованийĕпе оккупациленĕ влаçсем пирĕн граждансен этемле тивĕçлĕхĕсене ним вырăнне те хумаççĕ, оккупациленĕ облаçсенче нихăçанхи пек мар мăшкăлпа пусмăр режимĕ тăваççĕ. Нимĕçсен танковăй войскисен 2-мĕш группин командованийĕн приказĕнче, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тытса илнĕскерĕнче, оккупациленĕ облаçсенчи граждансене пурне те тĕрлĕ йывăр ĕçсенче ĕçлеттерме хушнă, çав ирĕксĕр ĕçшĕн тÿлемелле мар йĕрке тунă. Çав приказрах сĕмсĕррĕн çапла каланă:

«Тÿлевсĕр ĕçлесе халăх халиччен саботаж туса айăпа кĕнине тата саботаж туса малашне айăпа кĕме пултарассине каçарать», тенĕ.

Ирĕксĕрлесе ĕçлеттернинчен пăрăннăшăн чуралла ĕçлеттерсе пĕрлех, гитлеровецсем выçă пурăнса вăйсăрланса юлнă çынсен ĕç тухăçлăхĕ, оккупантсен шучĕпе, çителĕксĕрришĕн те мăшкăллаççĕ тата айăплаççĕ. Калуга хулинче 1941 çулти ноябрĕн 20-мĕшĕнче Германи комендантĕ майор Портациус алă пуса кăларса çапнă «пĕлтерÿ» акă мĕн çинчен калать:

«1. Каллаланса ĕçлекен е кăтартнă вăхăт хушшинче ĕçлемен граждансем çине укçан тÿлемелли штраф хураççĕ. Тÿлемеççĕ пулсан, айăплисене хĕнесе асаплантараççĕ.

2. Ĕçе кайма хушнă граждансем ĕçе тухман пулсан, вĕсене хĕнесе асаплантараççĕ тата вĕсене апат-çимĕç тĕлĕшпе хуларан пулăшу памаççĕ.

3. Ĕçрен пăрмаях пăрăнакан граждансене Калугăран кăларса яраççĕ. Ĕçрен хăракан граждансенчен рабочи отрядсемпе колоннăсем тăваççĕ те казармăсене вырнаçтараççĕ; вĕсен йывăр ĕçсем тумалла пулать».

Оккупациленĕ облаçсенчи хресченсем тĕлĕшпе Гитлерпа правительство тата командовани хăйсен умне çакăн пек тĕллев лартнă тата ăна практикăра пурнăçа кĕртеççĕ:

1) Совет государствин ĕмĕрлĕхех тата тÿлевсĕрех усă курма колхозсене панă çĕре Германи оккупантĕсен аллине илесси. Çакна тунă чухне колхозсен çĕрне те, çавăн пекех уйрăм хуçалăхлă хресченсен çĕрне те «Германи управленин ялхуçалăх отделне» параççĕ, çав ылханлă «Германи управленийĕ» кĕсем пуртса илнĕ çĕре хăй мĕнле тытас тенĕ, çавăн пек тытса тăрать;

2) Колхозсене пĕтересси тата «Германи управляющине» пуçлăха лартса, «общинăллă хуçалăхсем» тăвасси, фашистсем тунă çав «общинăллă хуçалăхсем» пулăшнипе тата Германи «управляющийĕсем» хĕнешипе хресченсене ирĕксĕрлесе пĕрле ĕçлеттересси, çавăн пек ĕçленипе тунă апат-çимĕçе тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене пухасси тата вĕсене Германи влаçĕсен аллине парса, нимĕçсен фашистла çарĕпе тылĕ валли ярасси;

3) Хресченсенчен туртса илнĕ çĕр çинче помещиксен имениĕсене тăвасси, вĕсене Германи помещикĕсен тата гитлеровецсене сывăх тăракан, ют çынсен пурлăхĕшĕн хапсăнакан «колонистсен» аллине парасси;

4) Гитлерла Германире ирĕксĕр ĕçлеттерсе усă курма çĕршер пин хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсене ирĕксĕрлесе илсе каясси.

Хресченсене çĕрсĕр тата апат-çимĕçсĕр тăратса хăварса, Гитлерăн тĕрлĕ иртен-çÿренсенчен уйăрса лартнă «управляющийĕсем» хушнипе хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсене чуралла ĕçлеттерсе, колхозсенчен туртса илнĕ çĕр çине Германи помещикĕсене лартса каллех помещиксен имениĕсене тума хатĕрленсе, шăпах çÿлте каланă пек тăваççĕ ĕнтĕ хресченсем тĕлĕшпе нимĕçсен фашистла влаçĕсемпе командованийĕ хăйсем оккупациленĕ совет районĕсенче. Шăпах çакăнта пулать ĕнтĕ оккупациленĕ совет облаçĕсене пăхса тăракан Альфред Розенберг, гитлерла правитель, патша шпионĕ пулнăскер, 1942 çулти февральте кăларнă «Çĕр законĕн» тупсăмĕ. Нимĕçсен фашистла генералĕсем хресченсене пусмăрлама ятарласа вĕрентсе хатĕрленĕ тĕрлĕ «ялхуçалăх офицерĕсем», «çар агрономĕсем» тата «Германи управленин ялхуçалăх отделĕн» гитлерла «управляющийĕсем» пулăшнипе Советăн оккупациленĕ районĕсенче—Украинăра, Белоруссире, Латвире, Литвара тата Эстонире туса пыракан «аграрлă йĕркесем» çакăн пек ĕнтĕ.

Германи оккупанчĕсем кăларнă приказсемпе инструкцисем те тата хăйсем пĕр вĕçĕмрен саракан листовкăсемпе чĕнсе каланисем те нумайĕшĕсем çавăн çинчен калаççĕ.

Германи командованийĕ вăрттăн кăларнă инструкцире, «Хĕвелтухăçĕнче хуçалăха ертсе пымалли принципсем» тесе ят панăскерĕнче (1941 çулти августăн 22-мĕшĕнче «Снабжени тĕлĕшпе панă уйрăм распоряжени» çумне хушса пани), çапла каланă:

«Чи кирлĕ задача вăл—ытларах тĕштырă, çу йышши культурăсем, нефть тата çăмăл металсем пухса илесси тата транспорт средствисемпе ялхуçалăх машинисене тăратасси пулса тăрать... Руководительсене ытларах нимĕçсенчен лартма тăрăшмалла, çапла вара вĕсем ертсе пыракан предприятисем хăйсен продукцийĕсене хăвăртрах ăсатма пултарччăр.. Халлĕхе колхоз системине хăварни нимĕç çарне тата хуçалăхне апат-çимĕç тăратма тата ĕçри çитменлĕхсене вырăс уйхирĕсен шучĕпе пĕтерме пулăшĕ».

Германин верховнăй командованийĕ «Хĕвелтухăçĕнче тытса илнĕ районсенче хуçалăха тытса пымалли çинчен кăларнă памяткăра» çапла каланă:

«Тытса илнĕ Хĕвелтухăç облаçĕсем Германин территорийĕсем пулса тăраççĕ. Çĕр, чĕрĕ тата ытти инвентарь... пурте Германи государствин пурлăхĕ пулса тăраççĕ».

Гитлеровецсен çав «памяткинчех» пурлăхсене тавăрса паратпăр тесе йăпатса, ĕçленĕшĕн çапла-çапла тÿлетпĕр тесе хресченсене улталамалли çинчен тата çак ĕç ăнăçлă пултăр тесен вырăс халăхне мĕн каламалли çинчен, Германи войскисене апат-çимĕç тăратас ĕçре тата Германие çар тата хуçалăх продукчĕсем тăратнă çĕрте «вырăнти халăхсен ĕçĕпе» ытларах усă курас тесен мĕн-мĕн тумалли çинчен ятарласа кăтартусем панă.

Украинăн нимĕçсем оккупациленĕ облаçĕсен «имперски комиссарĕ» текенĕ Эрих Кох хăйĕн Хĕвелтухăç Пруссирен тухнă çар служащийĕсем патне чĕнсе çырнă çырăвĕнче çав служащисене Украинăн çĕрĕсене тата ытти пурлăхĕсене валеçсе пама пулать:

«Имперски комиссар пулса тăрса, эпĕ пуян çĕрлĕ тата пуян шывлă-пурлă Украинăна илтĕм, фюрер (Гитлер) ирĕкĕпе унпа Европа усă курмалла... Фюрер мана шанса тăни сире мĕн кирлине пурне те тупса пама май парать, çак калама та çук пысăк задачăна пурнăçланă çĕрте эсир манăн чи çывăх помощникĕсем пулса тăмалла. Эпĕ сире пĕррехинче хамăр тытса илнĕ Хĕвелтухăç облаçĕсенче эсир пуринчен малтан предприятисем тата ĕç вырăнĕсем илетĕр тесе сăмах панăччĕ ĕнтĕ.. Эсир тата сирĕн ачăрсем çав нимĕçсен юнĕпе шунĕ çĕр çине нимĕçле пурнăç кÿрĕр».

Çак проходимецран Румыни верховнăй командованийĕн ставкинчи начальник помощникĕ генерал Тетерану та юлмасть. Вăл 1500/а номерлĕ циркулярта çакăн пек кăтарту парать:

«Хăюллă пулнăшăн тата чуна парса кĕрешнĕшĕн генерал Антонеску çак вăрçăра чапа тухнă çынсене ирĕке кăларнă территорири çĕрсене парса наградăласшăн. Çар чаçĕсем чапа тухнă офицерсен, унтер-офицерсен тата салтаксен, çĕр илме тивĕçлĕ пулнисен, спискине тумалла». Çав списока çар чаçĕсем кашни 15 кунра туса пымалла».

..Гитлеровецсен радио тăрăх паракан официальнăй пропагандинче уççăнах çапла калаççĕ: «Украинăра 25 миллион колонистсем—нимĕçсем тата вĕсемпе çывăх халăхсем вырнаçмалла, вĕсем нимĕнле йывăрлăхсăр та хăрамалла мар, мĕншĕн тесен мĕнпур йывăр ĕçсене украинецсем хăйсем туса пымалла». Пирĕн ялта пулса тăнă, хресченсемшĕн пуян та телейлĕ пурнăç патне каймалли çулла уçнă çĕнĕ, колхозлă строя пăсма, хăйсен нимĕçле-фашистла пусмăрлăхлă йĕркине туса хума Германи командованийĕ хресченсене чуралла-крепостнойла ĕçлеттерсе пурăнма хаяррăн хĕнесе ирĕксĕрлес тĕлĕшпе «ялхуçалăх ĕçĕн командисене», «çар агрономĕсене», «ялхуçалăх офицерĕсене», гитлеровецсем уйăрса лартакан «управляющисене» тата тĕрлĕ «комендантсене», «старостăсемпе» «бургомистрсене» виçесĕр пысăк правасем панă. Германи çарĕн 48-мĕш бронетанковăй корпусĕн штабĕ кăларнă приказ çапла калать: «Украина ялĕнче шалти йĕркелĕхе тытса тăрас служба чукмарпа хĕненипе туса пымалла...». Харьков облаçĕнчи Андреевка поселокĕнчи нимĕç комендантĕн 1941 çулти ноябрĕн 9-мĕшĕнчи приказĕ çапла хушать: «нимĕçсен командованийĕ уйăрса лартнă бургомистрпа унăн распоряженийĕсене пăхăнасси обязательно пулса тăрать. Итлеменнине асаплантарса вĕлереççĕ». Харьков облаçĕнчи Богата Черняшена ялĕнчи колхозникĕсем патне Германи влаçĕсем янă çырура çапла каланă: «Сирĕн нимĕç çарĕ валли эрнере 5 кун ĕçлемелле. Кам ĕçе тухмасть, ăна розгăпа 25 хут çапаççĕ». Нимĕçсемшĕн пĕтĕм вăй-хала пĕтеричченех ĕçлеме килĕшменнишĕн нимĕçсен командованийĕ официальнăй йĕркепе розгăпа 25-рен пуçласа 30 таран çапассине законлатнă. Колхоз членĕсем тата единоличниксем массăллăн ĕçе тухманшăн Германи командованийĕн приказĕсенче карательнăй экспедицисем ярассине пăхса хунă. Гитлерăн тыткăна лекнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем çумĕнче оккупантсен карательнăй отрячĕсем хĕненипе тата хресченсене массăллăн асаплантарса вĕлернине кăтартакан фотографисене тупнă. Германи командованийĕн циркулярĕнчен тата çакă курăнать: хĕненĕ тата асаплантарнă çĕрте пăхса тăмашкăн ялти халăха пыма хушаççĕ, персе вĕлернисен тата çакса вĕлернисен виллисене пытарма ирĕк памасăр темиçе эрне хушши тытса усраççĕ, çаксене хăратас шутпа тăваççĕ.

Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем хăйсен тылне ирĕксĕр илсе кайнă совет хресченĕсен тата ытти мирлĕ халăхăн йышĕ çĕршер пинĕн шутланать ĕнтĕ, тен, ытларах та пулĕ. Вăрçă туса пырас йĕркен тахçантанпах йышăннă законĕсене тата йăлисене преступникла пăхса, Германи командованийĕ гражданла мирлĕ халăхран арçынсене, нумай çĕрте тата хĕрарăмсене те, тыткăна илме, вĕсене тыткăнла илнĕ çар çыннисемшĕн тунă режима пăхăнтарма хăйĕн çар чаçĕсене приказ панă. Тыткăнри мирлĕ халăхшăн çакă вăл—чуралла йывăр ĕçе туса тăрассине кăна мар, тата нумай чухне выçăпа, чир-чĕрпе, хĕненипе тата массăллăн вĕлернипе пĕтсе пырассине пĕлтерет. Çапла, «тыткăна лекнĕ çар çыннисем» валли Минск хулинче тунă лагерьте çурт-çăрмĕнсĕр вырăнта çĕр пин çынна яхăн тытса усраççĕ, вĕсен пысăк пайĕ Белоруссири 15 çултан пуçласа 60 çула çитнĕ арçынсем пулаççĕ, çав лагерьте выçăпа, чир-чĕрпе, хĕненисемпе тата персе пăрахнипе кашни кунах çĕршер çын пĕтет. Вилесене нумай вăхăт хушши илсе каймасăр выртараççĕ. Тыткăна илнисене 5—6 кун хушши апат тата шыв памаççĕ. Апат панă чухне те ăна валеçсе панă çĕрти çынсем валли кăна апат çитет. Апат «валеçсе панă» чухне вилнисем кашнинчех темиçе вуншар çын пулаççĕ. Лагерьти охрана хăшпĕр чухне çĕртен пĕр метр çÿллĕш пулеметран персе тăма тытăнать, çапла вара лагерьте утса çÿрекен «тыткăнри» çынсене ирĕксĕрех çĕр çинче хырăмпа шуса çÿретерсе «савăнать». «Тыткăна лекнĕ çар çыннисем» валли Киев хулинче тунă лагерьте пĕтĕмпе 7.000 çын тытса усраççĕ, вĕсем хушшинче Хĕрлĕ Çар çыннисен йышĕ 15 процент çеç, ыттисем пурте Украинăри мирлĕ çынсем, вĕсен чуралла йывăр ĕçе туса вилсе пĕтме тивет. Ытти вуншар лагерьсенче те «тыткăна лекнисен» шутне кĕртнĕ гражданла мирлĕ халăх валли çавăн пек вилĕмле режимех туса хунă.

Мирлĕ халăха ирĕксĕрлесе Германи тылне илсе каясси, нимĕçсен фашистла çарĕ наступлени тунă тапхăрта анлăн пулса пынăскер, уйрăмах Германи çарĕсем чакса пынă чухне ытла та хаяррăн тата массăллăн пулса пырать, çав вара Германин верховнăй командованийĕ тÿррĕмех панă приказ тăрăх туса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Германин аркатса тăкнă чаçĕсен штабĕсенче тытса илнĕ чылай документсем хушшинче верховнăй командованин 1941 çулти декабрĕн 6-мĕшĕнчи 2.974/41-мĕш номерлĕ приказĕ пур, çав приказ тăрăх, оккупациленĕ вырăнсенчи халăх пурăнакан пунктсенчен çитĕнсе çитнĕ арçынсене пурне те тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсене ямалла тунă. 6-мĕш дивизири 37-мĕш полка 1941 çулти декабрĕн 2-мĕшĕнче панă приказра, «гражданла халăха илсе каясси çинчен» тесе ят панăскерĕнче, 7 ялти халăха пĕтĕмпех декабрĕн 4—12-мĕш кунĕсенче тыткăна илес тата ирĕксĕрлесех Германи тылне ярас тĕлĕшпе тунă тĕплĕ план пур. Приказăн 7-мĕш пунктĕнче акă мĕн çырнă:

«Çак приказа пурнăçа кĕртес ĕçе хаярлăхсăр тума çук. Илсе каясси çинчен халăха пĕлтернĕ вăхăтран вара халăх пурăнакан пунктсенчен никам та тухса кайма ан пултартăр тесе хытă сыхланмалла». Нимĕçсен 18-мĕш танковăй дивизийĕнчи 101-мĕш мотополкăн командирĕ 1941 çулти декабрĕн 12-мĕшĕнче каялла чакнă чухне кăларнă приказра çапла каланă: «Хĕçпăшал тытма пултаракан арçынсене пурне те тыткăнри çар çыннисене пухакан пунктсене ямалла. Хĕрарăмсемпе ачасене малти линири тĕп пунктсенчен хĕвеланăç еннелле куçармалла, нимĕç линири тĕп пунктсенчен вара пĕр-пĕр вырăна хăваласа пухмалла. Дивизи тăракан участока çурран, çунапа е йĕлтĕрпе пырса кĕнĕ арçынсемпе хĕрарăмсем çине пĕр сăмахсăрах пеме тытăнмалла», тенĕ.

Хăйсемпе пĕрле илсе каякан гражданла халăха, вăл шутра хĕрарăмсемпе ачасене те, Германин каялла чакакан чаçĕсемшĕн ирĕксĕрлесе ĕçлеттереççĕ, çулйĕрсене тасаттараççĕ, снарядсем пуçаттараççĕ, персе тăнă вăхăтрах блиндажсемпе окопсене апат-çимĕç леçме çÿретеççĕ, надсмотрщиксем хушнă тăрăх кирек мĕнле ĕçе те тутараççĕ. Дубовцы ялĕнчи (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) халăхăн хурлăхлă кунçулĕ—Германи оккупациленĕ районсенче нумайĕшĕнче пулса пыракан примерсенчен пĕри. Дубовцы ялне çунтарса ярма палăртса, нимĕçсен комендантĕ мĕнпур халăха çапла пĕлтернĕ: унта пурăннă çынсен, вĕсене ăсатакан нимĕç салтакĕсем мĕн хушнине йăлтах итлесе, хĕвеланăçнелле утмалла, 8 сехет иртнĕ хыççăн яла юлакан çынсене пурне те персе пăрахаççĕ, тенĕ. Çак ялти 14 хресчене, хăйсен тăван вырăнĕсенчен пăрахса кайма килĕшменскерсене, вăл шутра 7 хĕрарăма, оккупантсем персе пăрахнă. Ытти çынсене, вăл шутра кăкăр ĕмекен ачаллă хĕрарăмсене те, хĕллехи вăхăтрах ăшă тумтирсĕр тăратса хăварнăскерсене, нимĕçсем канăç тата апат-çимĕç памасăр, çул çинче тĕрлĕ йывăр ĕçсем тутарса, кĕрсе ăшăнма памасăр, хĕвеланăç еннелле хăваласа кайнă. Халран кайнă çынсем пĕрин хыççăн тепри ÿкме пуçланă. Çемьесемьипе çул çинче шăнса вилсе пĕтнĕ, анчах çав çул çинчи ытти ялсенчен çĕнĕ çынсем пухса колоннăсен йышне тултарсах пынă. Чĕрĕ тăрса юлнисене вара çак приказа вуласа панă: «Ĕçрен пăрăнакансене Германи командованийĕ çакса асаплантарса вĕлересси çинчен асăрхаттарать». Хĕрлĕ Çар чаçĕсем питех те хăвăрт хĕссе пыни кăна чĕрĕ тăрса юлнă мирлĕ халăха çăлса хăварнă.

Мускав облаçĕн нимĕçсем йышăнса тăнă районĕсенчен çавăн пек ирĕксĕрлесе Германи тылне 6.080 çынна илсе кайнă. Смоленск облаçĕн халĕ ирĕке кăларнă районĕсенче мирлĕ халăха кашни ялтанах е арçынсене хăйсен çемйисенчен уйăрса, е хĕрарăмсене час-часах хăйсен ачисенчен уйăрса тыткăна илсе кайнă, çавăн пек хаярлăха тата иртĕннине курман ял кунта пĕрре те çук. Çав çынсем хушшинче тăван çĕршыва каялла таврăнма пултарнисем питех те сахал. Каялла таврăннисем вара тем тĕрлĕ мăшкăл тÿсни çинчен, çавтери йывăр ĕçлеттерни, «тыткăнри» çынсем выçăпа тата асаплантарнипе массăллăн вилсе пĕтни çинчен, вăйсăрланнисене, аманнисене, чирлисене пурне те фашистсем вĕлерни çинчен калаçса кăтартаççĕ.

IV

Нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕ айне лекнĕ совет халăхĕсен нациллĕ культурине çĕмĕрни

Документсемпе фактсем çакна кăтартса параççĕ: нимĕçсен фашистла çарĕпе оккупациллĕ влаçсем халăха темле майпа пусмăрлассин умĕнче те, этемлĕх тивĕçлĕхне, нациллĕ туйăма, ĕненĕве, шухăша темле майпа мăшкăлассин умĕнче те чарăнса тăмаççĕ.

Тытса илнĕ совет территорийĕсенчи историпе культура памятникĕсене вараласа ирсĕрлесси тата пĕтерсе лартасси, çавăн пекех тата Совет влаçĕ тунă культурăллă йышлă учрежденисене çĕмĕресси — гитлерла правительство шухăшласа хунă тата ĕçе кĕртсе пыракан тĕлĕнмелле ăссăр планăн пĕр пайĕ пулса тăрать; çав планăн тĕллевĕ — вырăссен нациллĕ культурине тата Совет Союзĕнчи халăхсен нациллĕ культурисене пĕтерсе лартасси, вырăссене, украинецсене, белоруссене, литовецсене, латвиецсене, эстонецсене тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсене ирĕксĕрлесе нимĕçлетесси пулса тăрать. Вырăссен аслă культурине тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсен, совет влаçĕ вăхăтĕнче наци тĕлĕшĕнчен халиччен курман пек чечекленсе пырас çул çине тăнăскерсен, культурине пĕтерсе лартас ăссăр тĕллеве фашистла ухмахсем кăна хăйсем умне лартма пултарнă. Анчах, апла пулсан та, Германи командованийĕпе оккупациллĕ влаçсен йышлă приказĕсемпе распоряженийĕсем çакна кăтартса параççĕ: Совет Союзĕнчи халăхсене çавтери курайман пирки гитлеровецсем совет халăхĕсен наци тивĕçлĕхне мăшкăласа таптас тĕлĕшпе темĕн те тунă, çапла вара Германи фашизмĕ этемлĕхе курайманнин ирсĕр тупсăмне пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса панă.

Генерал-фельдмаршал фон Рейхенау панă паллă приказра Германи çарне вандализмла ĕçсем тума тÿрремĕнех хĕтĕртнĕ пулнă, унта çапла шухăш панă: «Хĕвелтухăçĕнче нимĕнле историллĕ е художествăллă паха япаласене те шута илмелле мар», тенĕ. Германин 17-мĕш армин командующийĕ генерал Хот 0.973/41-мĕш номерлĕ приказра хăйне пăхăнса тăракан çынсене çак идейăна, тăмсай фашистсемшĕн яланхи идея пулса тăракан, этемлĕхе кураймасăр тăма чĕнекен идейăна лайăх ăнланса илме хушать: «вырăссене таварăс тата вырăслăхпа çыхăнса тăракан япаларан йĕрĕнес туйăма, салтаксен çак вырăнлă туйăмне пусарса пырас пулмасть, йăлтах урăхла, ăна ырласа ÿстерсе пырас пулать». Гитлерла правительство, йĕрĕнчĕк «расăллă идеологие» яланхи пек ĕçе кĕртсе, хăйĕн çарне вырăс культурин, пĕтĕм тĕнчешĕн çавтери паха пулса тăраканскерĕн, кирек те мĕнле палăрăмне те кураймасăр тăма вĕрентет. Германин нумай офицерĕсем çумĕнче тупнă памяткăра, «Хĕвелтухăçĕнче нимĕçсем хăйсене мĕнле тыткаламалли тата вырăссемпе мĕнле пулмалли çинчен çырнă 12 заповедь» ятлăскерĕнче, культурăллă çынсемшĕн пачах та килĕшÿсĕр çакăн пек кăтартусем панă:

«Йышăнса илнĕ районсене Германишĕн нумай вăхăтлăха çĕнтерсе илмелле пулнă пирки сирĕн çакна лайăх ăнланса илес пулать: эсир аслă Германин тата çĕнĕ Европăн представителĕсем пулса тăратăр. Çавăнпа та сирĕн, Германи интересĕсемшĕн кирлĕ пулсан, чи хаяр тата пĕр шеллемесĕр тумалли мероприятисене тивĕçлипе туса пымалла. Унсăрăн эсир хăвăр çĕршывăрта ответлă вырăнсенче урăх ĕçлеме пултараймастăр. Вырăссене хăвăртан аякра тытса тăрăр. Вĕсем нимĕçсем пулманнине, славянсем пулнине нихăçан та ан манăр. Вырăс интеллигенцийĕнчен — çĕннинчен те, совет интеллигенцийĕнчен, çавăн пекех эмиграциринчен те, — сыхланăр, вăл нимĕн тума та пултараймасть. Вырăса эсир урăх шухăша ĕнентерейместĕр. Унпа калаçса ан тăрăр, ĕç тăвăр».

Культурăн паха япалисене пĕтерсе пыма йăла тытнă гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ совет территорийĕнче пур çĕрте те книгохранилищĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕ, чылай пысăк пайне çунтарса янă; вĕсем клубсемпе шкулсенчи пĕчĕк библиотекăсенчен пуçласа алçырăвĕсемпе кĕнекесен калама çук паха пуххисем таранах, тĕнчере те пĕрре кăна шутланакан япаласем таранах çапла тунă. Мускав облаçĕн хăйсем вăхăтлăха йышăнса илнĕ территорийĕнче оккупантсем 112 библиотекăна, 4 музея тата 54 театрпа кинотеатра çĕмĕрсе, çаратса пĕтернĕ. Гитлеровецсем чаплă Бородино музейне çаратса пĕтернĕ, кайран çунтарса янă; çав музейăн 1812 çулта Наполеон çарне хирĕç кĕрешни çинчен калакан историллĕ реликвийĕсем вырăс халăхĕшĕн уйрăмах паха пулса тăраççĕ. Полотняный завод поселокĕнче оккупантсем А. С. Пушкинăн çуртне-музейне çаратса пĕтернĕ тата çунтарса янă. Калугăра гитлеровецсем вырăссен чаплă ученăйĕ К. Э. Циолковский чаплă ĕçсем туса пурăннă çуртăн-музейăн экспоначĕсене пĕтерсе хунă, К. Э. Циолковскин аэронавтика тĕлĕшпе тунă паха ĕçĕсене пĕтĕм тĕнчипе пĕлсе тăраççĕ. Циолковскин портречĕ çине фашистла вандалсем револьвертан пенĕ. Дирижаблĕсен калама çук паха моделĕсене, чертежсене, приборсене таптаса ватса пĕтернĕ. Музейăн пĕр пÿлĕмĕнче чăх вити тунă, сĕтел-пукансене çунтарса янă. Совет Союзĕнчи ялхуçалăхĕн чи паха учрежденийĕсенчен пĕрне — Орел облаçĕнчи Шатиловкăри селекци станцине оккупантсем пĕтерсе тăкнă, çав станцин 55 çуртне, çав шутра агрохими лабораторийĕпе ытти лабораторисене, музея, 10 пин томлă библиотекăна, шкула тата ытти çуртсене сирпĕнтерсе тата çунтарса янă.

Украинăпа Белоруссире гитлеровецсем культура учрежденийĕсемпе истори памятникĕсене тата ытларах хаяррăн аркатса пынă. Белоруссире оккупантсем наукăсен академине аркатса тăкнă, çаратса пĕтернĕ, çав академире историллĕ документсемпе кĕнекесен сайра тĕл пулакан коллекцийĕ пулнă; Горецки ялхуçалăх академине аркатса çаратса пĕтернĕ, çак академи нумай пулмасть хăйĕн çĕр çулхи юбилейне уявласа ирттернĕччĕ; çĕршер шкулсене, клубсене, вуншар театрсене, музыка учрежденийĕсене тата халăх пултарулăхĕн сайра тĕл пулакан образецĕсене пĕтерсе тăкнă. Гитлерла вандалсем Украина историйĕн, культурин тата искусствин памятникĕсенчен вĕçĕ-хĕррисĕр мăшкăланă. Украина халăхĕн наци тивĕçлĕхне таптама ялан тăрăшнине палăртса паракан тĕслĕх вырăнне çакна илсе кăтартсан та çитет: Харьковри Короленко ячĕпе тăракан библиотекăна аркатса тăксан, фашистсем, хăйсен автомобилĕсене çÿреме аван пултăр тесе, пылчăклă урама çав библиотекăри кĕнекесемпе сарса тухнă.

Совет Союзĕ çине тапăнса, гитлерла правительство çапла шухăшланă: совет çĕрĕ çинче Германи çарĕ илсе килекен, анчах та пĕтĕм тĕнчери культурăллă халăхсем йĕрĕнсе сирсе пăрахакан раса теорийĕн ирсĕр идейипе практикине сарса çирĕплетсе лартма пулĕ, тенĕ. Гитлеровецсем хăйсен тăмсайлăхне пула çапла шухăшланă: СССР çине тапăнса, Совет Союзĕнчи халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрса яма пулĕ, Совет Союзĕнчи халăхсен тăванла пĕрлешĕвне çĕмĕрсе тата чуралантарса пыма пулĕ, ирĕклĕ совет халăхĕсен нациллĕ культурине пĕтерсе лартма тата пирĕн çĕршывăн халăхĕсене нимĕçлетмелли хăйсен ăссăр, тăмсайла планне пурнăçа кĕртме пулĕ, тесе шутланă. Герингăн маларах кăтартнă «симĕс папкинче» («Вырăнти халăх» ятлă II-мĕш пайра) фашистсем хăйсен çав планне çапла çырса кăтартнă:

«Балтика таврашĕнчи çĕршывсенче Германи оргăнĕсен нимĕçсем çине таянса ĕçлес пулать; литовецсем, эстонецсем, латвиецсем тата вырăссем хушшинчи хирĕçÿсемпе Германи валли усă курас пулать. Белоруссире пурăнакан вырăссенчен, еврейсенчен тата поляксенчен белоруссем ăстăн тĕлĕшĕнчен кайра тăнине шута илес пулать..., кăнтăрта украинецсемпе великоруссем хушшинче пулма пултаракан хирĕçÿсемпе хамăр валли усă курас пулать... Кавказра унта авалтан пурăнакан грузинсем, армянсем, тутарсем тата вырăссем хушшинчи хирĕçÿсемпе хамăр валли усă курас пулать, армянсем пире ытла та кăмăлламаннине асра тытас пулать».

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинче нациллĕ хирĕçÿ сарма шулĕ, çапла майпа пирĕн çĕршыва Германи фашизмĕ валли çаратса эксплоатацилесе пурăнассине çăмăллатма пулĕ, тесе шутланисем пурте ахалех пулчĕç. Çакăн пек çăмăлттайла шутланисем пурте пĕтĕмĕшпех пĕтсе ларчĕç, çапла вара вĕсем гитлеризмăн Совет Союзне хирĕç тунă юнлă похочĕ те путланса лармалла туса хучĕç.

Гитлерла оккупантсем совет халăхĕн турра ĕненекен пайĕн тĕн тĕлĕшĕнчи туйăмĕсене те шеллесе тăмаççĕ. Вĕсем совет территорийĕнче çĕршер чиркĕве çунтарса ячĕç, çаратса пĕтерчĕç, сирпĕнтерсе ячĕç, вараласа пĕтерчĕç; çав шутра вĕсем авалхи чиркÿ архитектурин урăх тĕл пулман памятникĕсене те хăшне-пĕрне пĕтерсе тăкрĕç. Мускав облаçĕн 13 районĕнче оккупантсем 42 чиркĕве çĕмĕрсе тăкнă, вырăссен авалхи хулинче Старицăра гитлеровецсем XVI ĕмĕрте туса лартнă монастыре çунтарса янă; унăн çуртĕсенче Хĕрлĕ Çарăн наступлени туса пыракан чаçĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсен, асаплантарса пĕтернĕскерсен, çарамаслантарнăскерсен, вутă купаланă пек купаласа хунă виллисене тупнă.

Амвросий Иванов пуп Мускав облаçĕнчи Иклински ялĕнчен çапла çырать:

«Нимĕçсем киличчен пирĕн чиркÿ пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулнă. Нимĕç офицерĕ мана чиркÿри япаласене пурне те унтан илсе тухма хушрĕ... Çĕрле войскăсем килчĕç те чиркĕве йышăнчĕç, лашасене кĕртсе ячĕç... Чиркÿре мĕн пуррине пурне те çĕмĕрме, нарăсем тума тытăнчĕç. Мĕн пуррине пурне те: престола, патша хапхине, чиркÿ ялавĕсене, плащаницăна кăларса ывăтрĕç. Пĕр сăмахпа каласан, чиркÿрен вăрă-хурахсен шăтăкĕ туса хучĕç».

Верейăри собора оккупантсем малтан çаратса пĕтернĕ, унти мĕнпур япаласене илсе кайнă, кайран çав собортан çынсене допрос туса асаплантармалли çурт туса хунă; нимĕçсем тарнă хыççăн унта красноармеецсен хуçкаласа-таткаласа пĕтернĕ 26 виллине тупнă. Троицкое ялĕнчи чиркÿрен нимĕçсем ризăсене илсе кайнă та вĕсемпе хăйсен лашисене витсе пурăннă. Гостешево ялĕнче вĕсем чиркĕве çаратнă, ялавĕсене хуçса пĕтернĕ, кĕнекисене сапаласа янă, Михаил Страхов пупа çаратнă та хăйсемпе пĕрле тепĕр района илсе кайнă. Можайск çывăхĕнчи Холм ялĕнче нимĕçсем 82 çулти пупа çаратнă тата хĕнесе пĕтернĕ; Можайскран каялла чакнă чухне нимĕçсем Вознесенипе Троица чиркĕвĕсене тата Николай чудотворец соборне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсем хăйсем тухса каяс умĕн çунтарса янă ялсенчи халăхăн пĕр пайне пуринчен ытла çав чиркÿсене хăваласа кĕртеççĕ ĕнтĕ, унтан вăл чиркÿсене, унта питĕрсе лартнă çынсемпе пĕрлех, çунтарса яраççĕ.

Нимĕç фашисчĕсем тата вĕсене пулăшакансем тăвакан ирсĕр преступленисен вĕçĕ-хĕрри те çук. Гитлерла ирсĕрсем пирĕн тăван çĕршывра хăйсем пуç пулса тăрассине вăйпа çирĕплетсе лартас тесе темĕнле преступлени те тăваççĕ.

Çаксем пурте акă мĕн çинчен калаççĕ: преступниксен банди, гитлерла прави-

(Малалли 3-мĕш страницăра)

Оккупациленĕ совет районĕсенче Германи влаçĕсем çавтери усал, тискер тата пусмăрла ĕçсем туни çинчен тата çав преступленисемшĕн Германи правительствипе командованийĕ ответлă пулса тăни çинчен

ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ЯНĂ НОТА

(Малалли)

тельство текенскер, пирĕн халăха çаратасшăн анчах мар, тунă хуласемпе ялсене çĕмĕрсе тăкасшăн анчах мар, Совет Союзĕнчи халăхсен аслă культурине пĕтерсе тăкасшăн анчах мар, вăл тата совет халăхĕсене чуралантарма, пирĕн чаплă тăван çĕршыва фашистсем чуралантарнă колони туса хума тăрăшать.

V.

Оккупациленĕ совет районĕсенчи мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарни тата пусмăрлани

Хăйĕн халăхне пусмăрласа çĕкленнĕ гитлерла ушкăн Европăри çĕршывсенче, гитлерла Германия вăхăтлăха оккупациленĕскерсенче, халăха этемле мар хаярлăхпа тыткалать; анчах та совет территорийĕ çине çĕмĕрсе кĕнĕ чухне Германи çарĕ çав хаярлăхран нумай ытларах хаярлăх кăтартрĕ. Гитлеровецсем мирлĕ совет халăхне тискеррĕн тыткалани этемлĕх историйĕн тата тĕнчери хальхи вăрçăн чи юнлă ĕçĕсенчен те иртсе каять, çакă вăл фашистсен вырăссене, украинецсене, белоруссене тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсене вĕлерсе пĕтерме тунă юнлă преступниллĕ планĕсене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларать.

Германи командованийĕн мирлĕ совет çыннисене вĕлерсе пĕтерме хушакан приказĕсемпе инструкцийĕсем фашистсен çав тĕлĕнтерсе яракан планĕсенчен тухса тăраççĕ те ĕнтĕ. Сăмахран, Германин верховнăй командованийĕ кăларнă «Противникăн гражданла халăхне тата тыткăна лекнĕ çынсене мĕнле тыткаламалла» ятлă инструкци çапла калать: «Гражданла халăха пĕр шеллемесĕр тыткаламалла, çак ĕçе офицерсем иртсе пымалла» тет, вара çакăн пек тума хушать: «халăхăн пĕтĕм массине вăйпа тăна кĕртмелле», тет. Германи командованийĕ Белорусси территорийĕнчи оккупациллĕ влаçсем патне янă инструкцире çапла калана: «Халăх нимĕçсен хĕç-пăшаллă вăйĕсемпе вĕсен организацийĕсене хирĕç кирек мĕн тунăшăн та вĕлермелле. Кам красноармеецсене е партизансене пытарать, ăна вĕлермелле. Партизана тупаймасан, халăх хушшинчен заложниксем суйласа илмелле. Партизансене е вĕсене пулăшакансене 24 сехет хушшинче илсе пымасан, çав заложниксене çакса вĕлермелле. Кун хыççăнхи талăксенче заложниксене икĕ хут ытларах хисеппе çакса вĕлермелле».

Феодоси хулин нимĕç коменданчĕ Эбергард капитан панă 431/41-мĕш номерлĕ приказăн çиччĕмĕш пунктĕнче çапла калана:

«Тревога вăхăтĕнче урама тухакан кашни гражданина персе вĕлермелле. Тухакан граждансен ушкăнĕсене çавăрса илес пулать те пĕр шеллемесĕр персе пăрахас пулать. Вожаксене тата хĕтĕртекенсене халăх умĕнче çакса вĕлерес пулать».

Германин 260-мĕш пехотнăй дивизийĕ гражданла халăха мĕнле тыткаламалли çинчен кăтартса панă инструкцире уйрăм офицерсене: вĕсем «пур çĕрте те мар кирлĕ пек хаяр пулаççĕ», тесе астутарнă.

Совет хулисемпе ялĕсенче оккупантсем кăларса çакакан приказсенче тĕрлĕ сăлтавсемшĕн вĕлермелли çинчен калана: пилĕк сехет иртсен урама тухнăшăн, ют çынсем çĕр выртнăшăн, красноармеецсене тытса паманшăн, пурлăха паманшăн, халăх пурăнакан пунктра, çунтарса яма палăртнăскерте, пушара сӳнтерме хăтланнăшăн, халăх пурăнакан пĕр пунктран теперне кайнăшăн, ирĕксĕр ĕçре ĕçлеме килĕшменшĕн тата ытти те. Кун çумне тата çакна хушса каламалла: нумай чухне оккупантсем нимĕнле приказра та кăтартса паман сăлтавсемпех персе вĕлереççĕ, пуринчен ытла совет çыннисене хăратмашкăн е тӳрременех пĕтерсе тăкас тесе, цивилизациллĕ çын пĕлмен туйăма, юн ĕçес туйăма кăнăçтарас тесе вĕлереççĕ; çак туйăма Германи çарĕнче гитлеровецсем пăхса çитĕнтереççĕ, ырласа тăраççĕ.

Гитлерла оккупантсем пулнă пур хуласенче те, пур ялсенче те тенĕ пекех вĕсем чи малтанах совет учрежденийĕсемпе предприятийĕсен работникĕсене, партизансене тата вĕсемпе çыхăну тытаççĕ тесе шутланă çынсене халăх умĕнче çакса е персе вĕлернĕ. Гитлерăн çарĕ хăш чухне çакăн пек туса та вĕлерет: Ленинград облаçĕнчи Сольцы хулинче, партизансене кăмăлласçĕ тесе шухăшласа, Агеев учительпе Таранов çамрăка шалçа çине чиксе лартса вĕлернĕ, виллисене вара икĕ эрне хушши шалçа çинчен илме ирĕк паман. Çакăн пек тискеррĕн вĕлерни пирĕн вăхăтра пачах тĕлĕнмелле япала пулса тăрать.

Ялсемпе саласенче совет хресченĕсемпе хресчен хĕрарăмĕсене—колхозниксемпе единоличниксене, совет интеллигенцине асаплантарса вĕлернĕ чухне гитлерла палачсем асаплантармалли этемле мар майсем шутласа кăлараççĕ. Çапла, сăмахран, Тула облаçĕнчи Дубенски районри Протасово ялĕнче гитлеровецсем колхоз председательне Морозов хресчене ним юлмиччен çарамаслантарнă та пĕр талăк хушши сивĕ çуртра чĕркуççи çинче тăратнă, кун хыççăн ăна ял тăрăх илсе çӳренĕ кайран вара ăна пилĕк таран çĕре алтса купаласа лартнă, унăн виллине эрне хушши пытарма ирĕк р[illegible]н. Курск облаçĕнчи Черемисиновски районри Покровски ялсоветĕнче фашистсем А. Н. Алехин хресчене çарамаслантарса хăйне валли шăтăк чавтарнă, шăтăк виçине пĕлес тесе, ăна темиçе хут выртарса пăхнă. Шăтăка чавса çитерсен, Алехинăн аллисене хуçнă, хăлхисене касса татнă, куçĕсене чиксе шăтарнă, вара персе пăрахнă. Орел облаçĕнчи Должански районри Донец ялĕнче гитлеровецсем 17 çулти Надежда Мальцевăна çыхса пăрахнă та унăн амăшне, Мария Мальцевăна, хăйĕн хĕрне улăмпа витсе вут тивертсе яма хушнă. Амăшĕ тăнран кайса ӳкнĕ. Вара гитлеровецсем хĕрачана хăйсем улăмпа витнĕ те вут тивертсе янă. Амăшĕ тăна кĕрсен, вут çине ывтăнса хăйĕн хĕрне туртса кăларнă. Прикладпа çапса гитлеровецсем амăшне вĕлернĕ, хĕрне вара персе пăрахнă та çулăм çине ывăтнă.

Германин урса кайнă оккупанчĕсене йĕркеллĕ пулма чĕнни усăсăр. Германи влаçĕсем пусмăрлани çинчен вырăнти халăх жалобăсем паннине яланах «большевикла пропагандăпа» е «партизансене пулăшнипе» танлаштараççĕ, жалоба паракансене час-часах персе пăрахаççĕ. Мускав облаçĕнчи Солнечногорск районĕнчи Овсянниково ялĕнчи хресчен хĕрарăмне Устиновăна, 5 ача амăшне, вĕлерни çавăн пек тĕслĕхсенчен пĕри пулса тăрать, вăл хăйĕн сивĕпе асапланакан ачисен тумтирĕсене, оккупантсем илсе кайнăскерсене, хăйне тавăрса пама ыйтса нимĕçсен штабне пынă пулнă. Устиновăна нимĕç офицерĕ штаб çурчĕ умĕнчех персе вĕлернĕ, Устинова çав çурта хăйĕн ыйтăвĕпе пынă пулнă.

Каялла чакса пыракан гитлерла захватчиксем кĕлле халăх пурăнакан пунктсене хăйсем çунтарса янă хыççăн совет хĕрарăмĕсене, ачасене тата стариксене уй-хирсемпе вăрмансене хăваласа кайнă, çавăнпа та выçă пурăнса тата сивĕсене пула нумай пиншер совет хĕрарăмĕсем, ачасемпе стариксем вилсе пĕтнĕ. Гитлерла оккупантсем мирлĕ халăха асаплантарнин, массăллăн вĕлернин вĕçĕ-хĕрри çук. Асаплантарассипе вĕлерессин ялан пекех этемле мар хаярлăхпа пулса иртет: ачасене ашшĕ-амăшĕсем умĕнчех хĕнесе пĕтереççĕ, ашшĕ-амăшĕсене вĕсен ачисем умĕнче хĕнеççĕ, çынсене шыраса тупса гранатăсемпе, пулеметсенчен персе, вутта пăрахса вĕлереççĕ, чĕрĕллех çунтарса яраççĕ тата чĕрĕллех пытараççĕ, сивĕ çĕрте шыв сапса тăрса çынсене пăрлă юпасем туса хураççĕ, çын виллисене касса чиксе пĕтереççĕ, чĕрĕ тата вилнĕ çынсенчен те мăшкăллаççĕ, вĕсене юн чусти туса хураççĕ. Хуласенчи пиншер çынсене персе вĕлереççĕ, пĕтĕм ялсенчи халăхсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкаççĕ. 1942 çулти январĕн 7-мĕшĕнче Смоленск облаçĕнчи Козельски районри Побуж ялĕнчи 110 мирлĕ граждансем—9 старик, 51 хĕрарăм тата 50 ача питех те йывăр хĕн-хур курса вилнĕ, вĕсене фашистсем çĕçĕсемпе каснă, штыксемпе чикнĕ, вĕсем çине гранатăсем пăрахнă, автоматсемпе пулеметсенчен пенĕ. 1942 çулти мартăн 15-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, каялла чакакан гитлеровецсем Орел облаçĕнчи Лыково ялĕнчи хресченсене çавăн пекех тискеррĕн вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн, унта мирлĕ пурăннă 730 çынран 50 çын кăна чĕрĕ юлнă. Мускав облаçĕнчи Лотошински районри ялсенче гитлеровецсем колхозниксен 13 çемьине чĕрĕллех çунтарса янă, 153 колхозницăпа колхозника асаплантарса çакса вĕлернĕ, 507 çынна, вăл шутра нумай хĕрарăмсемпе ачасене, персе пăрахнă. Новозыбково хулинче оккупантсем пĕр каç хушшинчех 380 çемьене—стариксене, хĕрарăмсене, çул çитмен ачасене 1000 çынна ытла вĕлернĕ, вуншар ачасене чĕрĕллех çĕр алтса пытарнă.

Хăйсене ирĕке кăларасса кĕтекен вырăс ялĕсенчен, Украина, Белорусси, Молдави, Латви, Литва, Эстони, Карело-Финн республикисенчи хуласемпе ялсенчен те çавăн пек тискер те юнлă ĕçсем туни çинчен калакан çĕршер хыпарсем килеççĕ. Çапла, сăмахран, Украинăри Полтава облаçĕнчи Гадяч тата Зеньково хулисенчен çавтери тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ 280 граждани çинчен нумаях та пулмасть пĕлтерчĕç, вĕсен виллисене гитлеровецсем шăтăка пăрахнă, асаплантарса вĕлернĕ ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле чĕрĕ ачасене те çавăнта пăрахса пытарнă. 1942 çулти январь уйăхĕнче кăна Харьков хулинчен унта 370 заложнике—украинецсемпе вырăс служащийĕсене, интеллигенци представителĕсене Украинăри партизансен ĕçĕсемшĕн асаплантарса вĕлерни çинчен калакан хыпарсем килчĕç.

Гитлеровецсем Феодоси хулинчи мирлĕ халăха пĕр пин çынна ытла, вăл шутрах Крымри 245 тутара, вĕлерни гитлерла тискер ĕçсен юнлă списокне яланлăхах кĕрсе юлать. Кăкăр ачиллĕ амăшсене, стариксене, йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, çул çитмен ачасене вуншар грузовиксем çине лартса хуларан илсе тухса кайнă та, пĕр айăпсăр мирлĕ çынсене шăтăк патне ушкăнăн-ушкăнăн илсе пырса, пулеметсенчен персе вĕлернĕ. Персе пăрахнă хĕрарăмсемпе ачасене, вăл шутрах вилсе каяйман çынсене те, çĕр сапса пытарнă.

Гитлеровецсем 1941 çулти октябрĕн 27-мĕшĕнче Таганрог хулинчи 3.000 çынна ытла вĕлернĕ. Германи командованийĕ хушнă тăрăх, хулари çак çынсем хăйсемпе пĕрле, оккупантсем хулине илтлесе, виçĕ куллăх продовольстви илсе, хăйсен пĕтĕм çемьисемпех шкул çурчĕ патне пынă. Гитлеровецсем вĕсен продовольствине туртса илнĕ те хăйсене хула тулашне хăваласа кайнă, унта халăх ушкăнĕнчен çĕр çынна яхăн суйласа илсе, вĕсене темиçе вунă метр хушши аяккалла илсе кайнă та ыттисен куçĕ умĕнчех автоматсенчен персе вĕлернĕ. Кун хыççăн арçынсемпе хĕрарăмсене, ачасемпе стариксене çĕршерĕн-çĕршерĕн суйласа илсе персе пăрахма тытăннă.

Пирĕн чаçсем Керчь хулине ирĕке кăларнă хыççăн Германи çарĕ совет çĕрĕ çинче тăвакан чи юнлă преступленисенчен пĕрин çинчен—вырăнта пурăнакан 7.000 çынна ытла персе пăрахни çинчен тĕплĕн пĕлнĕ. Германи комендатури хулара çыпăçтарса тухнă 4-мĕш номерлĕ приказ тăрăх вĕсене улталаса Сенная площадьне чĕнсе пухнă та унта арестленĕ, вара хула тулашне илсе кайса пулеметсенчен персе вĕлернĕ.

Туллимар даннăйсем тăрăх, Белоруссин виçĕ хулинче кăна нимĕç оккупанчĕсем мирлĕ халăха 28.000 çынна ытла асаплантарса вĕлернĕ: Витебскра—6.000 çынна, Пинскра—10.000 çынна, Минскра—12.000 çынна ытла вĕлернĕ.

Украина хулисенче темиçе çĕр пин украинецсем, вырăссем, еврейсем, молдавансем тата ытти нацири мирлĕ граждансем Германи палачĕсен аллинчен вилнĕ. Пĕр Харьковра кăна гитлеровецсем оккупацин малтанхи кунĕсенчех 14.000 çынна персе пăрахнă.

Шутсăр нумай фактсем çакăн çинчен калаççĕ: гитлерла бандитсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет территорийĕсенче хĕрарăмсенчен мăшкăлласа асап кăтартнине Германи командованийĕ ырлать, вăл хăй çавнашкал ашкăнма ирĕк парать. Гитлеровецсем хăйсем мăшкăл кăтартнă хĕрарăмсене чылайĕшне вĕлереççĕ, Германи çарĕ валли уçакан аскăнлăх çурчĕсене кайма килĕшмен хĕрарăмсемпе хĕрсене вĕлереççĕ. Калугăра темиçе совет хĕрарăмĕ, офицерсен тата салтаксен аскăнлăх çурчĕсене ирĕксĕр илсе пынăскерсем, çав мăшкăла чăтаймасăр хăйсене хăйсем вĕлернĕ. Ленинград облаçĕнче Чудовски районра, нимĕçсем çунтарса янă Маслено ялĕнче шăнса хытнă 8 виле тупнă. Вĕсем—хĕрарăмсемпе хĕрсен виллисем. Гитлеровецсем хĕрарăмсемпе хĕрсене мăшкăл тунă та кайран пере-пере пăрахнă. Гитлеровецсем хăйсем мăшкăл тунă çынсен сăмсисене каса-каса илнĕ, пичĕсене ним палламалла касса-çурса пĕтернĕ, хырăмĕсене штыксемпе çурса пăрахнă. Могилев облаçĕнче белоруссен ялĕнче—Холмра гитлеровецсем 15 çултан пуçласа 17 çула çитнĕ 6 хĕрачана тĕл пулнă та, вĕсене тытса намăслантарнă, кайран кăкăрĕсене касса илнĕ, куçĕсене тĕртсе шăтарнă, вара вĕлернĕ. Пĕр çамрăк хĕре—Аксенова колхозницăна йывăççен тăррисене авса пуç хĕрлĕ çакнă та çурмарен çурса пăрахнă. Çак фактсем вĕсем ирсĕр ĕçсен хăшпĕр тĕслĕхĕсем кăна-ха. Хĕрлĕ Çар оккупантсенчен ирĕке кăларнă хуласемпе ялсенче палăртнă çавнашкал ирсĕр ĕçсем темиçе пине çитеççĕ.

Нимĕçсен фашистла командованийĕ хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене вĕлерме чармасть кăна мар, çапла тума уççăнах хăй сĕнет. Ачасене организованно вĕлерес ĕçе хăшпĕр приказсенче партизанла движение хирĕç кĕрешмелли ĕç пек туса кăтартнă. Сăмахран, нимĕçсен 25-мĕш дивизин командирĕн—генерал-лейтенант фон Бешниттăн 1941 çулти декабрĕн 2-мĕшĕнче кăларнă приказĕнче «стариксем, хĕрарăмсем тата тĕрлĕ çулти пĕчĕк ачасем» Германин линийĕ хыçĕнче çӳренине «калама çук юрăхсăр япала» тесе хак панă. Унта çапла тума хушнă: «Гражданла çынсенчен кам та кам малти лини патне çывхарать, çав çынна, вăл хăть арçын, хăть хĕрарăм, хăть ватă, хăть çамрăк пултăр,—ним кăшкăрса систермесĕрех персе пăрахмалла». «Ют çынсене, уйрăмăнах ачасене курсан, çийĕнчех вырăнти комендантсене систермелле», вара кашнинех «шпионаж ĕçĕпе çыхăннă çын пек туйăнсан, çавăнтах персе пăрахмалла. Çак ĕçе туса пырас ответлăха бургомистрсем çине хумалла».

Оккупантсем ачасене тата çамрăксене питех те тискеррĕн асаплантараççĕ. Мускав облаçĕн халĕ ирĕке кăларнă районĕсенче гитлеровецсем асаплантарса чăлах туса хăварнă 160 ача Мускав хулинчи Русаков больницинче сывалаççĕ. Çав ачасенчен пĕри — Ваня Громков, 14 çултискер. Новинки ятлă ялтан. Çав ачана гитлеровецсем чĕн пиçихисемпе темкел çумне çыхса хунă та тутăхса пĕтиччен пăчăхтарса касса сулахай аллине татнă. Курск облаçĕнчи Крюково ялĕнчи 12 çулти Валя Крюковăна икĕ аллине те касса пăрахнă, хăйне вара, юнланса пĕтнĕскерне, совет войскисен енне хăваласа янă.

1942 çулти январĕн 9-мĕшĕнче эсэсовецсем (фашистла хурал отрячĕсен салтакĕсем) Хĕрлĕ Çар хăйсене каялла хăваласа ярас умĕн Калинин облаçĕнчи Ксты ятлă ялта пур стариксене те, хĕрарăмсене тата ачасене ирĕксĕрлесе ял тулашне хăваласа тухнă. Вара амăшсен куçĕ умĕнчех ачисене пĕрин хыççăн тепĕрне тискеррĕн асаплантарса вĕлерме тытăннă. Пĕр эсэсовецĕ хресчен хĕрарăмĕн Гараевăн аллинчен икĕ çулти ывăл ачине туртса илнĕ те, амăшĕ куçĕ умĕнчех юпа çумне çапса, ачан пуçне ватса пăрахнă. Гараевăн икĕ хĕрачине, 6 тата 7 çултискерсене, персе вĕлернĕ. Ытти ачасене те çав шăпах тивнĕ. Çакăн хыççăн хĕрарăмсемпе стариксене 70 çынна çити пĕр сарая хупнă та вут тивертсе янă.

Смоленск облаçĕнчи Потапово ялĕнче гитлеровецсем 2 çурта хăвăрт çурăлман минăсем лартнă. Çав çуртсене хĕрарăмсемпе ачасене 47 çынна пухса питĕрсе лартнă. Хĕрарăмсем те, ачасем те минăсем хуни çинчен пĕлмен. 1942 çулти январĕн 26-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре нимĕçсен патрулĕ умĕнчех икĕ çурчĕ те сывлăша сирпĕннĕ, пӳртри çынсем 47 çынĕ те вилсе пĕтнĕ.

Мускав облаçĕнчи Алферьево тата Тимково ялĕсенче пурăнакан халăхсем 1942 çулти январĕн 14-мĕшĕнче çырнă актран çакă паларать: оккупантсем çав ялсенче пурăнакан халăхсене йăлтах çаратса тухнă, çурт-йĕрĕсене пĕтĕмпех çунтарса янă хыççăн, ялти мĕнпур пек çынна, пĕчĕк ачасене те, стариксемпе хĕрарăмсене те — 100 çынна яхăн уя хăваласа тухнă, вара пулеметран пеме тытăннă. Çапла майпа вĕсем 42 çынна вĕлернĕ, 20 çынна амантнă. Вилнисен шутĕнче кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсем те, тĕрлĕ çула çитнĕ ачасем те пулнă. Фашистсем аманнă çынсене медицина пулăшăвĕ партарман, уйран илсе кĕртермен, çапла вара аманнисем уйрах шăнса вилсе выртнă. Ытти çынсене, çав шутрах ачасене те, нимĕçсем хăйсемпе пĕрле хăваласа кайнă, наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çар ан петĕр тесе, хăйсем çав çынсен хӳттипе пырса каялла чакнă. Çул çинче вĕсене, асаплантарассипе тата персе вĕлерессипе хăратса, юр тасаттарнă, виле шăтăкĕсем чавтарнă тата ытти йывăр ĕçсем тутарнă. Хăваласа кайнă çынсен ăшă тумтирĕсене хыва-хыва илнĕ, вĕсене хăйсене сивĕ çĕрте тытнă, апат-çимĕç паман, йывăр ĕçе тӳсейменнисене прикладпа хĕненĕ, халтан кайнисене пере-пере пăрахнă.

Смоленск облаçĕнчи Речица ялĕнче пурăнакан хĕрарăмсемпе ачасен ушкăнĕ геройсен вилĕмĕпе вилнĕ. Çав ушкăна нимĕçсем 1942 çулти февралĕн 1-мĕшĕнче ялтан илсе тухнă. Нимĕçсем Будские Выселки ятлă ял çине контратака тунă, вĕсем çав хĕрарăмсемпе ачасене хăйсен малти подразделенийĕсен умĕнче илсе пынă. Хĕрарăмсемпе ачасем совет позицийĕсем патне çывхарсан, красноармеецсене хăюллăн çапла кăшкăрнă: «Перĕр! Пирĕн хыçра нимĕçсем!» — тенĕ. Гитлеровецсем çакна асăрханă та паттăр патриотсем çине автоматсенчен пеме тытăннă, тăвата пĕчĕк ачана тата виçĕ старике вĕлернĕ. Вилнисен шутĕнче—Е. И. Шишкина тата унăн 8 уйăхри ывăлĕ Юрий, С. М. Жуковская тата унăн ывăлĕсем — 15 çулти Геннадипе 13 çулти Валентин, 14 çулти Анна Юрсова.

Германи оккупанчĕсем Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăнса кĕрсе малтанхи эрнесенче тунă ирсĕр ĕçсене, уйрăмăнах вĕсем Белоруссире, Украинăра тата Балтика таврашĕнчи совет республикисенче пурăнакан халăхсене тискер кайăкла пĕтерсе пынине, хăшне-пĕрне халĕ кăна палăртса документсемпе çирĕплетсе параççĕ. Сăмахран, 1942 çулти январь уйăхĕнче, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Торопцы хула таврашĕнчи районра нимĕçсен кавалерин «СС» бригадине аркатса тăкнă чухне, ытти документсемпе пĕрле, çав асăннă бригадăри 1-мĕш полкăн отчетне тытса илнĕ. Вăл отчетра çак асăннă полк Белоруссире Старобинск районне мĕнле «пĕлтантарни» çинчен çырнă. Полк командирĕ çапла çырса пĕлтерет: тыткăна илнĕ 239 çынна персе пăрахнисĕр пуçне, унăн полкĕнчи отряд мирлĕ халăхсене 6.504 çынна персе вĕлернĕ. Отчетра çакна та палăртнă: çав отряд полка 1941 çулти июлĕн 27-мĕшĕнче 42-мĕш номерпе панă приказа пăхăнса ĕçленĕ. Çав бригадăри 2-мĕш полкăн командирĕ фон Магилл хăйĕн пĕлтерĕвĕнче 1941 çулти июлĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа августăн 11-мĕшĕччен Припять операцине мĕнле ирттерни çинчен çырать: «Эпир хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене шурлăха хăваласа кăлартăмăр, анчах та ку пире пысăк усă параймарĕ, мĕншĕн тесен шурлăх тарăн мар иккен, унта çынсем путса вилмеççĕ. Пур çĕрте те тенĕ пек пĕр метр тарăнăшĕнче хытă çĕр (тен, хăйăр) пур». Çав штабрах кавалерин «СС» бригадин командирĕ Штандартен-фюрер янă 37-мĕш №-ĕ телеграммăна тупнă, ăна 1941 çулхи августăн 2-мĕшĕнче кавалерин 2-мĕш полкĕн утлă отрядне янă пулнă. Çав телеграммăра «СС» тата полицийн имперски фюрерĕ Гиммлер мирлĕ халăхсене «çавтери сахал вĕлернĕ» тесе ... тенĕ, çавăнпа та «çине пăрахах» ĕçлеме кирлине, «соединени командирĕсем операци тунă чухне ытла та çемçе чĕреллĕ пулнине» асăрхаттарнă, мĕн чухлĕ çын вĕлерсе пынине куллен пĕлтерсе пыма приказ панă.

Керчь хулине Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларни оккупантсен çавнашкал тискер ĕçне, ытти юнлă та тискер ĕçсенчен уйрăмăнах палăрса тăракан ĕçе тăрă шыв çине кăларма пулăшрĕ: Германин вырăнти комендатури ашшĕ-амăшĕсене хăйсен ачисене шкула яма приказ панă. Шкул ачисем, 245 ача, çав приказа итлесе, шкула хăйĕн класне кайнă. Вĕсем хăйсемпе пĕрле учебниксем те, тетрадьсем те илсе пынă. Ачасем шкула пынă та каялла вĕсенчен пĕри те таврăнайман. Хулана ирĕке кăларнă хыççăн, хуларан 8 километрта, тарăн канавра çав 245 ачан виллисене тупнă. Вĕсене нимĕç оккупанчĕсем персе пăрахнă. Çав калама çук тискер ĕç çинчен калакан документсем тата фотографисем совет правительстви аллинче упранаççĕ.

Гитлеровецсем хăйсем тытса илнĕ совет хулисемпе ялĕсенчи больницăсенче выртакан çынсене организованно тата массăллăн вĕлерес йăла тытнине цивилизациллĕ тĕнче пĕлме тивĕç. Çакăн евĕрлĕ ирсĕр ĕçсенчен пĕрне кăна асăнăпăр. Ун çинчен ятарласа тунă авторитетлă комисси çырнă актра тĕплĕн кăтартнă; çав комиссире доктор Ислович, врач Кащенко, доктор Тверитин, доктор Обновленский, профессор Вершинский, профессор Брадис, доктор Абрамов тата доктор Федосеев пулнă. Калинин облаçĕнчи Бурашево ялĕнче нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем доктор Литвинов ячĕпе тăракан больницăри пациентсене 530 çынна вĕлернĕ; гитлеровецсем 1941 çулти ноябрĕн 15-мĕшĕнче больницăна йышăннă та, малтан больницăран продовольстве йăлтах çаратса тухнă, çакна вара чирлĕ çынсене выçă тăратса хăварнă; кайран больницăн темиçе корпусне «тасалма» приказ панă, корпуссене кĕрсе чирлĕ выртакан çынсене, хăйсем тĕллĕн утма пултарайманнисене койкăсем çинчен сĕтĕре-сĕтĕре антарнă; чирлисене нумайĕшне палатăсенчех штыкпа чиксе-чиксе пăрахнă, пере-пере вĕлернĕ. 80 çынна, Бретнево ялне илсе кайма ĕлкĕрнĕскерсене, тискер кунне персе вĕлернĕ; ыттисене вара фашистсем темиçе кун хушшинче пĕрлĕ эмелсем, вĕлерекен им-çамсем (морфий, скополамин, веронал, амитал) парса вĕлернĕ. Çакăн хыççăн фашистсем больницăн çурчĕсенчен лаша витисем туса хунă. Каялла чакнă чухне фашистсем больницăн 5 лечебнăй корпусне, ачасен яслине тата пурăнмалли 5 çурта вут тивертсе çунтарса янă.

Вăрă-хурахла ушкăн, хăйне гитлерла Германин правительстви тесе ят панăскер, пирĕн халăха пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма шухăшлани çинчен, гитлеровецсем хăйсен çав этемле мар планне пурнăçлас тесе темĕнле тискер ĕçсем те тума хатĕр тăни çинчен, темĕнле преступленисем тума та, массăллăн вĕлерме те хатĕр тăни çинчен çак фактсем ĕнтĕ уççăн кăтартса параççĕ.

VI.

Тыткăна лекнĕ çар çыннисене вĕлерсе пĕтерни

Гитлерла правительство çын вĕлерекен банди пулса тăрать, вăл хăйĕн умне пирĕн граждансене вĕлерсе пĕтерес тĕллеве лартнă, çакă вăл совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисем тĕлĕшпе тунă хăрушла преступленисенчен те курăнать. Совет правительстви аллинче халĕ совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисем тĕлĕшпе тунă юнлă преступленисене (вĕсем çинчен СССР правительстви 1941 çулти ноябрĕн 25-мĕшĕнче панă нотăра каланăччĕ) çирĕплетекен нумай çĕршер çĕнĕ документсем пур. Çакна уççăнах палăртнă: Германи çарĕн командованийĕ, хăйĕн çарĕ юлашки уйăхсенче тӳснĕ поражениссемшĕн тавăрас тесе, совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисене вĕлерсе пĕтерес йĕркене пур çĕрте те практикăна кĕртнĕ.

Фронт тăршшĕпех, Арктикăран пуçласа Хура тинĕс таранах, совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисен асаплантарса вĕлернĕ ӳчĕсене тупнă. Çак вилесем çинче ялан пекех вĕлерес умĕн тискеррĕн асаплантарнин паллисем пур. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем нимĕçсенчен тытса илнĕ блиндажсенче, йывăçпа çĕртен тунă точкăсенче, çавăн пекех тата халăх пурăнакан пунктсенче те совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисен тискер кайăкла асаплантарса вĕлернĕ ӳчĕсене тупаççĕ. Курнă çынсем алă пуса çырнă актсенче час-часах çакăн йышши фактсем тĕл пулаççĕ: 1942 çулти мартăн 2-мĕшĕнче тата 6-мĕшĕнче Крым фронтĕнче 66,3 высотапа тата Джентор ялĕн районĕнче красноармеецсен 9 виллине тупнă, вĕсене фашистсем çавтери тискеррĕн çурхаласа пĕтернĕ пирки икĕ виллине çеç палласа илме май килнĕ. Асаплантарса пĕтернĕ тыткăнри çар çыннисен пӳрнесем çинчи чĕрнисене тăпăлтарса кăларнă, куçĕсене шăтарнă, пĕрин кăкăрĕн пĕтĕм сылтăм пайне касса илнĕ, ыттисене вут кăварпа асаплантарнине, çĕçĕпе нумай çĕртен чиксе суранлатнине, янаххисене ватса пĕтернине палăртнă. Феодоси хулинче красноармеец-азербайджанецсен вуншар виллисене тупнă. Вĕсен хушшинче: Джафаров Исмаил-Заде, гитлеровецсем унăн куçне чавса кăларнă тата хăлхисене касса илнĕ; Алибеков Кули-Заде, гитлеровецсем унăн аллине парса янă, кайран штыкпа чиксе вĕлернĕ; ефрейтор Ислам-Мамед Али оглы, гитлеровецсем унăн хырăмне касса илнĕ; Аскеров Мустафа оглы, ăна юпа çумне пралукпа çыхнă пирки вăл çавăнтах суранĕсене пула вилнĕ. Çакăн пек тискер ĕçсене Германи фашисчĕсене пулăшакан финсем те инçетри çурçĕрте туса пыраççĕ. Карели фронтĕнче Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тапăнса пынă чухне Финлянди фашисчĕсем асаплантарса пĕтернĕ красноармеецсен вуншар виллисене тупнă. Сăмахран, Сатаев красноармеецăн финсем хăлхине касса илнĕ, куçне чиксе шăтарнă та пушă гильзăсем кĕртсе лартнă, Лазаренко красноармеецa финсем нумайччен асаплантарса пуçне çапса çурнă та унта сухарисем тултарса сăмса шăтăкĕсене патронсем тирсе лартнă, кăкăрĕ çинче хĕртнĕ тимĕрпе çунтарса пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр тунă.

Совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисене массăллăн вĕлерни хурлăхлă та вăрăм списокĕсенчен çак хăшпĕр фактсене илсе кăтартатпăр.

Смоленск облаçĕнчи Красноперево ялĕнче Хĕрлĕ Çарăн наступлени туса пыракан чаçĕсем тыткăна лекнĕ 29 красноармеецпа командирăн çара виллисене тупнă. Вĕсене пăшалтан персе амантман, йăлтах çĕçĕпе чиксе вĕлернĕ. Çав районтах Бабаево ялĕнче гитлеровецсем тыткăна лекнĕ 58 красноармеецпа икĕ санитаркăна улăм купи патĕнче хăварнă та улăм купине тивертсе янă. Çунса кайма тытăннă çынсем тарма хăтлансан, гитлеровецсем вĕсене пере-пере пăрахнă. Кулешовка ялĕнче нимĕçсем йывăр аманнă 16 красноармеецпа командира çавăрса илнĕ, тыткăна лекнисене хывăнтарнă, вĕсен повязкисене сĕвсе илнĕ, вĕсене выçă усранă, штыксемпе тирнĕ, аллисене хуçнă, суранĕсене чакаланă тата ытти майпа та асаплантарнă, çакăн хыççăн чĕрĕ юлнисене пӳрте хупнă та тивертсе янă.

Калинин облаçĕнчи Стренево ялĕнче нимĕçсем аманнă 50 красноармееца шкул çуртне хупнă та вĕсене çунтарса янă. Волоколамск хулинче, Пролетарски урамри 3/6-мĕш номерлĕ çуртăн 5-мĕш хутне хупса лартнă красноармеецсене унта пушар тухсан та çуртран тухма чарнă. Тухма е чӳречесенчен сикме хăтланакансене пере-пере пăрахнă. Çулăмра çуннипе тата персе пăрахнипе тыткăнри 60 çын пĕтнĕ. Тула облаçĕнчи Поровка ялĕнче тыткăна лекнĕ 140 красноармееца сарайне хăваласа кĕртнĕ те сарайне тивертсе янă. Çулăмра 95 çын пĕтнĕ. Ленинград облаçĕнчи Погостье станцийĕнчен 6 километрта Хĕрлĕ Çар чаçĕсем хĕснипе чакакан нимĕçсем, совет çарĕн тыткăна лекнĕ 150 çыннине тискеррĕн хĕненĕ тата асаплантарнă хыççăн, çурăлса каякан пульăсемпе пере-пере пăрахнă. Чылай вилесенне хăлхисене касса илнĕ, куçĕсене чавса кăларнă, пӳрнисене касса татнă, хăшпĕрисенне пĕр аллине е икĕ аллине касса илнĕ, чĕлхисене туртса кăларнă. Виçĕ красноармеецăн çурăмĕсем çинче çăлтăрсем касса кăларнă. Смоленск облаçĕнчи Кондрово ялне Хĕрлĕ Çар чаçĕсем 1941 çулти декабрьте ирĕке кăларичченех кăшт маларах нимĕçсем хула тулашĕнче тыткăнри 200 красноармееца персе пăрахнă. Вĕсене нимĕçсем хула тăрăх çарамаслантарса тата çара уран илсе пынă; вăйсăрланса çитнĕ, малалла утма пултарайман красноармеецсене тата утнă вăхăтрах вĕсене çăкăр таткисем илсе тухса паракан вырăнти çынсене çавăнтах пере-пере пăрахнă.

Юлашки вăхăтра Германи командованийĕ совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисемпе мина хирĕсене тасатас ĕçре тата пурнăçшăн хăрушă ытти ĕçсенче сĕнĕрен усă курнине палăртнă. Сăмахран, Пысăк тата Пĕчĕк Влоя ялĕсен районĕнче, пĕтĕçтерсе тăратнă тыткăнри вуншар çынсене гитлеровецсем миналанă уй тăрăх тăватă талăк хушши хăваласа çӳренĕ. Минăсем çинче кун-серен темиçе çын сирпĕне-сирпĕне кайнă. Тыткăна лекнĕ çынсене çапла майпа вĕлерессине Германи командованийĕн приказĕсенче пăхса хунă. 303-мĕш пехотнăй полка панă 109-мĕш номерлĕ приказра çапла каланă: «Армийĕн главнокомандующийĕ генерал-фельдмаршал Рундштедт çапла тума хушрĕ: Германи юнне сыхлас тесе, çапăçу тулашĕнче минăсем шырас тата мина уйĕсене тасатас ĕçе тыткăна лекнĕ вырăссемпе туса ирттермелле. Ку вăл Германи минисем тĕлĕшпе те çаплах пулмалла».

Тыткăна лекнĕ çынсене тăххăнмаллисĕр, уйрăмах ăшă тумтирсемсĕр хăварасси Германи командованийĕ пулăш-

Юлашки 4-мĕш страницăра

ОККУПАЦИЛЕНĔ СОВЕТ РАЙОНĔСЕНЧЕ ГЕРМАНИ ВЛАÇĔСЕМ ÇАВТЕРИ УСАЛ, ТИСКЕР ТАТА ПУСМĂРЛА ĔÇСЕМ ТУНИ ÇИНЧЕН ТАТА ÇАВ ПРЕСТУПЛЕНИСЕМШĔН ГЕРМАНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИПЕ КОМАНДОВАНИЙĔ ОТВЕТЛĂ ПУЛСА ТĂНИ ÇИНЧЕН

ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ЯНĂ НОТА

(Ю л а ш к и)

нипе пĕрмаях пулакан мародерство пулса тăрать. Хĕллехи условисенче тыткăна лекнĕ çынсемшĕн çакă вăл пăнса вилнипе пĕрех пулнă. Çаксем пурте Германи командованийĕн приказĕсем тăрăх пулса пыраççĕ. Нимĕçсен 34-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 88-мĕш полк штабĕн «Тумтирсем пирки ĕç мĕнле тăни» ятлă приказĕнче «Тыткăна лекнĕ вырăссенчен урана тăхăнмаллисене ним шухăшламасăр хывса илме» хушнă. Çак приказ ăнсăртран пулман. СССР çине ултавлăн тапăначченех Германи командованийĕ хăйсен çарĕсене çапла майпа тумлантарассине пăхса хунă. 56-мĕш дивизири 234-мĕш полкăн ĕç хучĕсем хушшинче «Хĕвел тухăçĕнчи снабжени принципĕсем çинчен» 1941 çулти июнĕн 6-мĕшĕнче кăларнă 121/4-мĕш номерлĕ циркуляра тупнă, унăн 8-мĕш страницинче çапла каланă: «Тумтир парса тăрасси çинчен шутламалли çук. Çавăнпа та тыткăна лекнĕ çынсем çинчен урана тăхăнмаллисене хывса илме тата юрăхлă тумтирсемпе, кĕпе-йĕмсемпе, носкисемпе т. ыт. пурринпе те çийĕнчех усă курни питĕ кирлĕ», тенĕ.

Совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисене массăллăн вĕлерсе пĕтерес тесе, вĕсене апат-çимĕçсĕр хăвараççĕ, вăрахчăн выçса вĕлермелле тăваççĕ, хăшпĕр чухне тата пĕлсе тăрсах юрăхсăр апат-çимĕç парса вĕлереççĕ. Совет оргăнĕсен аллинче çулте асăннă 88-мĕш полк штабĕн 202-мĕш номерлĕ приказĕ пур, унта çапла каланă: «Лаша виллисем тыткăна лекнĕ вырăссен апачĕ пулса тăраççĕ. Çавăн пек пунктсем (лаша виллисен купписем) ăçтине указательсемпе паллă тунă. Вĕсем Мало-Ярославец патĕнчи шоссе çинче тата Романовăпа Белоусово ялĕсенче пур».

Мотопехотăн 60-мĕш дивизине 166/41-мĕш номерпе панă приказ тыткăна лекнĕ çар çыннисене массăллăн вĕлерсе пыма тӳрремĕнех хушать. Приказра çапла каланă: «Вырăс салтакĕсемпе кĕçĕн командирĕсем çапăçура питĕ хăюллă. Уйрăм пĕчĕк часть та пулин яланах атакăна йышăнать. Çавăнпа та тыткăна лекнĕ çар çыннисем çине этемле пăхни пулмалла мар. Противника пăшалран персе е чиксе пĕтерсе тăкасси противника пĕтĕмĕшпех сиенсĕрлетиччченех пулса пымалла...»

Совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисене мĕнле тыткаламалли çинчен калакан Германи командованийĕн 1/3.058-мĕш номерлĕ инструкцийĕнче çакăн пек кăтартса панă: «Кăшт та пулин итлеменни палăрсанах, вăйлăн та çирĕппĕн кĕрешее пулать, хĕçпăшалпа пĕр шеллемесĕр усă курас пулать. Патакпа, хулăпа, çапăпа усă курни пулмалла мар. Итлекен тата ĕçлеме юратакан тыткăнри çар çынни çăмăллăн тыткалани те хамăр вăйсăррине кăна кăтартса парать тата ун пекки пулмалла мар». (II-мĕш пунктран). «Тыткăна лекнĕ çар çыннисем ĕçре чухне вĕсем хушшинче яланах хĕçпăшалпа усă курма май паракан дистанци пулмалла». (III-мĕш пунктран).

Çаксем пурте çителĕксĕр пулнă иккен. Гитлер ячĕпе, главнокомандующи текенскерĕн ячĕпе, Германи çарĕн верховнăй командованийĕ 1942 çулти январĕн 14-мĕшĕнче кăларнă приказра çапла каланă (II-мĕш пункт): «Тыткăна лекнĕ çар çыннин ӳкĕтне кĕни, ăна этемле тыткалани вырăн йышăнмалла мар. Германи салтакĕ хăй тыткăнри çынран çӳлте тăнине яланах туйтарса тăма тивĕçлĕ... Тыткăнри çын тĕлĕшпе хĕçпăшалпа мĕнле те пулин кая юлса усă курни хăрушлăх пулса тăрать. Çак приказ пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕрĕ тесе главнокомандующи шанса тăрать».

ССР Союзĕн нимĕçсем оккупациленĕ территорийĕнче, çавăн пекех тата Германин инçетри тылĕпе Европăри вăл оккупациленĕ çĕршывсенче тыткăнри красноармеецсем мĕнле пурăнни çинчен Совет Правительстви халĕ те шанчăклă информаци илсе тăрать. Çав Информаци тыткăнри красноармеецсен, ытти çĕршывсен тыткăнри çынĕсемпе танлаштарсан уйрăмăнах начар условисенче пурăнакансскерсен, пурнăç режимĕ малалла начарланса пыни çинчен, советăн тыткăна лекнĕ çыннисем выçлăха тата чирсене пула вилсе пĕтни çинчен, гитлерла влаçсем красноармеецсене ирсĕррĕн тата тискеррĕн мăшкăлласа усрани çинчен каласа парать. Çав гитлерла влаçсем пĕтĕм тĕнчери правăн тата этемлĕх моралĕн чи элементарнăй требованийĕсене тăхçанах пăснă ĕнтĕ.

Кăçалхи февралĕн 18-мĕшĕнче Лондонра Совет Посолне Польша республикин Правительстви Польша территоринче тата нимĕçсем оккупациленĕ совет облаçĕсенче советăн тыткăнри çыннисем мĕнле пурăнни çинчен çырса меморандум панă, унта Германи влаçĕсем советăн тыткăнри çыннисене этемле мар тыткаланин нумай йышлă фактĕсене кăтартса панă. Польша правительствин меморандумĕнче питех те тĕрĕс каланă: «Советăн тыткăна лекнĕ çыннисене тыткалани нимĕç варварствин чи ирсĕр страници пулса тăрать пулмалла», тенĕ.

Çаксене пурне те пăхмасăр, Совет Правительстви, гуманноçăн тата пĕтĕм тĕнчери йĕрке тăрăх хăй çине илнĕ обязательствăсен принципĕсене тĕрĕс тытса пыраканскер, хальхи обстоятельствăсенче те Германин тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе ответлă репрессивнăй мерăсем йышăнма шутламасть, тыткăна лекнĕ çар çыннисен режимĕ тĕлĕшпе 1907 çулта Гаагăри конвенцире Совет Союзĕ хăй çине илнĕ обязательствăсене халиччченхи пекех пăхăнса пырать. Çав конвенци çине Германи те алă пуснă, анчах унăн пур пункчĕсене те вăл ултавлăн пăсрĕ.

Çавăнпа пĕрлех Совет Правительстви çапла пĕлтерет: советăн тыткăнри çар çыннисене вĕлерсе айăпа кĕнĕ гитлерла ирсĕр правительсемпе вĕсен тарçисем çак питех те тискер ĕçсемшĕн пĕтĕмĕшпех ответлă пулса тăраççĕ.

Ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсен интересĕсем, пĕтĕм этемлĕхĕн интересĕсем çапла тума хушаççĕ: урса кайнă çынçиенсен шайкине, гитлерла Германин правительстви текенскерне, май пур таранах хăвăрт тата яланлăхах пĕтерсе тăкмалла.

* * *

Нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем мирлĕ совет халăхĕсем тĕлĕшпе тата советăн тыткăна лекнĕ çыннисем тĕлĕшпе тăвакан тискер те хăрушă ĕçсем çакăн пек ĕнтĕ. Çав тискер ĕçсем умĕнче Чингис-ханăн, Батыйăн, Мамайăн тискер ĕçĕсемпе хаярлăхĕсем те шупкалса ĕçĕсемпе хаярлăхĕсем те шупкалса юлаççĕ.

Юнлă Гитлер Совет Союзĕнчи халăхсем валли хатĕрленĕ нимĕçле-фашистла пусмăр çакăн пек ĕнтĕ. Çав пусмăр хăйĕн ирсĕрлĕхĕпе тата хаярлăхĕпе тутарсемпе монголсен пусмăрĕн историйĕнчи тискерлĕхпе хаярлăхсенчен пуринчен те иртсе каяççĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ 1941 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче кăларнă пуриншĕн те паллă Приказра Совет Правительстви çапла каларĕ: Совет Союзĕнчи халăхсемпе Хĕрлĕ Çар «ытти халăхсене, вăл шутра нимĕç халăхне те, раса тĕлĕшпе курайманни пулман тата пулма та пултараймаст», пирĕн Хĕрлĕ Çар «мĕнпур халăхсемпе расăсен пĕртанлăхне, ытти халăхсен прависене хисеплес» туйăмпа вĕренсе воспитани илнĕ; пирĕн Хĕрлĕ Çарăн «нимĕç халăхне вĕлерсе пĕтерес тата Германи государствине пĕтерсе тăкас» тĕллев пек «идиотла тĕллевсем пулман тата пулма та пултараймаççĕ».

Çавăнпа та ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн, хамăрăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхне, чыслăхне тата никама пăхăнманлăхне, пирĕн çĕршыври халăхсен ирĕклĕхĕпе телейне Германи империалисчĕсенчен хӳтĕлесе, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пушшех те вăйлăн çĕмĕрсе тата пĕтерсе пыма сăлтав та правăсем те пур.

Антив, Гитлерпа гитлерла вăрă-хурахсем Совет Союзĕнчи халăхсене чуралантарас тата Совет Государствине пĕтерсе тăкас тесе кулăшла тĕллевсем лартчăр. Пурне те тума пултаракан улăпсем пек курăнма тăрăшакан Берлинри карликсен çак камитле кăтланăвĕсем култарнисĕр пуçне урăх нимĕн те пама пултараймаççĕ. Дон-Кихот та пĕррехинче пĕтĕм тĕнчене тепĕр майлă çавăрса хума тĕллев лартнă, анчах вăл çынсемшĕн кулăш япали пулса тăнă. Власть патне ăнсăртран пынă фантазерсемпе авантюристсем кăна çавăн пек идиотла тĕллевсем лартма пултарнине, вĕсем пурпĕрех тĕп пулассине чи сывăх вăхăтрах пулас фактсем кăтартса парĕç.

Оккупациленĕ совет районĕсенче вĕçĕ-хĕррисĕр преступленисем туса, çаратса, çĕмĕрсе, юхăнтарса, тискеррĕн асаплантарса, мăшкăлласа, пусмăрласа тата массăллăн вĕлерсе гитлеровецсем тăвакан ирсĕр ĕçсене пĕтĕм тĕнче умĕнче тăрă шыв çине кăларса, ун çинчен ССР Союзĕ дипломатиллĕ çыхăну тытакан Правительствăсене пурне те пĕлтерсе,—Совет Союзĕн Правительстви Совет Союзĕнчи халăхсен ячĕпе çапла калать: СССР халăхне хирĕç тата ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене хирĕç хăйсем тунă этемле мар мĕнпур ĕçсемшĕн çирĕп ответ тытассинчен тата тивĕçлĕ наказани илессинчен Гитлерла правительствăпа унăн тарçисем хăтăлаймĕç.

Пышăнăр т. ыт. те.

В. МОЛОТОВ».

Мускав, 1942 çулти апрелĕн 27-мĕш.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 28-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 27-мĕшĕнче нимĕçсен 20 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 12 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 27-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 10 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 60 ытла автомашинине, боеприпассем тиенĕ 40 лавне, 11 бензинзаправщикне, 2 прожекторне, 7 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 12 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи состава аркатса тăкнă, противникăн пехотине 5 ротăна çити сапалантарса янă, вĕсен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем малалла куçнă тата хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын ытла вилнĕ. Полковой артиллерирен персе, нимĕçсен бомбардировщикне персе антарнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕçсен контратакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 200 вилли выртса юлнă. Противникран 72 автомат, 10 пулемет, 2 миномет, винтовкăсем, патронсем тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Кононенко лейтенант командир пулса ертсе пыракан красноармеецсен отрячĕ противникăн тылне кĕнĕ те вăрманта, нимĕçсен çар чаçĕсем иртсе пыракан шоссе çулĕ çывăхĕнче засада тунă. Тăшмана тылран пырса çапса, Кононенко юлташăн отрячĕ 80 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 3 станковăй тата 7 ручной пулемет, 30 винтовка, 4.000 патрон тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Нимĕçсен 30 автоматчикĕ пирĕн пĕр подразделение флангран пырса çапма хăтланнă. Гвардеец-пулеметчик Червяков, гитлеровецсене çывăхах ярса, вĕсене тĕл пенипе кĕтсе илнĕ. Нимĕç автоматчикĕсем, 12 виле пăрахса хăварса, пăтрашса кайса каялла чакнă.

* * *

В. юлташ командир пулса тăракан партизансен группи пĕр яла пынă венгерецсен карательнăй отрячĕ çине тапăннă. Çапăçнă çĕрте партизансем тăшманăн 42 салтакне пĕтерсе тăкнă. Ыттисем тарнă. Çакăн пек трофейăсем илнĕ: радиостанци, станковăй тата темиçе ручной пулемет, 10.000 патрон, 2 ещĕк граната тата 25 винтовка.

* * *

Нимĕçсен 29-мĕш моторлă дивизийĕнчи 29-мĕш мотоциклетлă батальонăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Вилли Шадт çапла каласа панă: «Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçлас умĕн 29-мĕш дивизире 12.000 çын пулнă. Командовани официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, дивизири 6.500 çын вилнĕ. Халĕ чăннипе дивизи пĕтĕмпех сапаланса кайнă. Унтан сапаланчăк уйрăм чаçсем кăна тăрса юлнă. Пирĕн батальон мотоциклетлă пулнă, халĕ вăл пехотнăй батальон пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн мотоциклечĕсене пурне те çухатса пĕтерчĕ. Пире вырăссен артиллерийĕ пысăк çухатусем кӳчĕ. Юлашки икĕ эрне хушшинче пирĕн батальонра 275 салтак вилнĕ тата аманнă. Нумай салтаксем çинчен пĕр хыпар та çук».

* * *

Пирĕн чаçсем О. ялне йышăнса илнĕ чухне нимĕç салтакĕсен ушкăнне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисенчен пĕри, Оберхарт, çапла каласа панă: «Ман батальонра, фронта нумай пулмасть килнĕскерĕнче, мĕнпур йышран çурри не яхăн кăна юлчĕ. Салтаксем вăрçасшăн мар, вăрçă пĕтессине хытă кĕтеççĕ. Фронта килнĕ чухне çул çинче унтер-офицер Парль, Российăна хирĕç вăрçма килĕшменскер, перĕнсе вилчĕ. Салтаксем пĕр-пĕрин хушшинче çапла калаçаççĕ: вăрçă çитес уйăхсенчех пĕтмесессĕн, вара Гитлерпа унăн çывăхĕнчисемшĕн вилĕм çитет, теççĕ».

* * *

Финлянди хаçачĕсен ирĕксĕрех государство заемĕсем ăнăçсăр пулнине йышăнма тивет, çав заемсемпе Гитлерăн Финляндири лакейĕсем ССР Союзне хирĕç преступникла вăрçă туса пыма укçа-тенкĕ мобилизацилеме хăтланнă пулнă. «Суомен сосиальдемократти» çакăн çине кăтартса парать: заемсене правительство халăх заемĕсем тума тăрăшрĕ, анчах çакăнтан нимĕн те тухмарĕ. Хаçат çапла каласа хăратать: халăх малашне те заемсене хирĕç пырсан, вара правительство налогсене пысăклатать, тет. Заем облигацийĕсене туянма килĕшмесĕр, Финлянди халăхĕн анлă массисем çавна тунипе гитлерла шайка интересĕсемшĕн пыракан преступникла вăрçа хирĕç протестлеççĕ.

* * *

Чехословаки патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Апрелĕн 9-мĕшĕнче Чехословаки партизанĕсен К. хула патĕнчи сăртсенче çапăçакан отрячĕ нимĕçсен карательнăй экспедицине пĕтерсе тăкнă. Партизансем трофейăсем тытса илнĕ.

Апрелĕн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.600 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери пенипе тата разведка групписем çапăçнипе тăшманăн 5 дзотне, 17 блиндажне çĕмĕрнĕ, 4 миномете, 16 пулеметне, 2 автомашинине тата çар грузĕсем тиенĕ 10 лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче гитлеровецсем танксем пулăшнипе пирĕн подразделенисене атакăлама хăтланнă. Шерикалов юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем орудисене усă позицисем çине тĕксе кăларнă та тӳрремĕн тенĕ пекех персе тăшманăн 4 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Çавăн пекех тата противникăн чĕрĕ вăйне те пысăк çухатусем кӳнĕ. Вара противникăн каялла чакма тивнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем политрук Жмуров юлташ ертсе пынипе В. ялне çĕнтерсе кĕрсе кайнă. Кунта ал вĕççĕн тытăçса çапăçма пуçланă. Çав çапăçура красноармеецсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла вĕлернĕ, тăшманăн 4 орудине, 3 пулеметне пĕтерсе тăкнă, телефон линине аркатса пăрахнă. Фашистсен вĕлернĕ офицерĕ çумĕнчен кирлĕ документсем кăларса илнĕ.

* * *

Тăшманăн шалти тылĕнче кĕрешекен пирĕн разведка группи нимĕçсен К ялĕнче тăракан гарнизонне çĕрле пырса тапăннă. Разведчиксем нимĕçсене темиçе вуншар çынна вĕлернĕ те хăвăрттăн аякалла пăрăнса кайнă. Çав вăхăтра çак ял патнелле тăшманăн чаçĕ çывхарса пынă. Кунти лару-тăрура мĕн пулса пынине чухласа илеймесĕр, гитлеровецсем хăйсен çав ялти гарнизонĕ çине минометсемпе пулеметсенчен пемe пуçланă. Пирĕн разведчиксем виçĕ сехет хушши нимĕçсем пĕр-пĕрне пĕтернине пăхса тăнă.

* * *

Тăшманăн пулемечĕ пирĕн боецсене малалла куçма чăрмантарса тăнă. Фокин красноармеец çав огневой точка патне пластунла шуса пынă та автоматран персе противникăн пулемет патĕнчи расчетне йăлтах пĕтерсе тăкнă. Снайперсем Леонтьевпа Жуков юлташсем пĕр кун хушшинче 15 гитлеровеца пĕтернĕ.

* * *

Нимĕçсен вĕлернĕ салтакĕ Август Кофлер çумĕнче вăл хăй ашшĕ патне Потсдам хулине яма çырнă çырăвне тупнă. Çырура çапла каланă: «Эпир нӳрĕ землянкăсенче выртатпăр. Пур çĕрте те шĕлкĕш те пыйчăк. Ĕлĕкрех килнĕ фронтовиксем тарăхса çитнĕ, куне-кунĕпе ятлаçаççĕ. Вĕсем хăйсене пуçлăхсем улталанă тесе шутлаççĕ. Вĕсене çуркунне çитеспе отпуска яма пулнă, анчах та пĕр намăса пĕлмесĕр вĕсене чике таранах лартнă... Ку эрне иртнĕ эрнерен лăпкăрах иртсе кайрĕ, анчах çапах та ротăра 47 çын каталчĕ, хăшĕ вилнĕ, хăшĕ пĕр хыпарсăр çухалнă. 6 кун хушши ĕнтĕ разведкăна каякансенчен пĕри те таврăнни çук. Салтаксем разведкăна каякансене — вилме каякансем теççĕ... Пирĕн малашлăхра мĕн пулассине халех татса хунă. Пирĕн малалли пуласлăхра нимĕн ырри те курăнмасть».

* * *

Апрель уйăхĕн варринче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне килекен румын салтакĕсен батальонĕ восстани туса иртгернĕ. Браилов станцинчен инçех мар, салтаксем поезда чарса лартнă, вагонсем çинчен аннă та хăйсене киле салатса яма ыйтнă. Офицерсем револьверсемпе хăратса салтаксене каялла вагонсем çине лартма хăтланнă, анчах вĕсене хăйсене пурне те вĕлерсе тăкнă. Çав вырăна çитнĕ карательнăй отряд 40 салтака яхăн персе пăрахнă. Нумайĕшне арестленĕ. Анчах та салтаксенчен пĕр чылаях йышлă пайĕ тарса хăтăлма ĕлкĕрнĕ.

Югослави посланникне С. Симич господина В. М. Молотов юлташ йышăнни

Апрелĕн 27-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Югославин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй посланникне, Полномочнăй Министрне С. Симич господина йышăннă.

Югославин ССР Союзĕнчи посланникĕ С. Симич господин верительнăй грамотăсем пани

Апрелĕн 27-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Югославин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникне тата Полномочнăй Министрне С. Симич господина йышăннă. С. Симич хăйĕн верительнăй грамотисене М. И. Калинина панă.

ВКП (б) Центральный Комитечĕн пропагандăпа агитаци Управленийĕнче тата Хĕрлĕ Çарăн Политуправленинче

Ĕçсыннисен кăмăлне шута илсе, ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăçалхи Майăн 1-мĕшпе 2-мĕш кунĕсене ĕçлемелли кунсем турĕç. Çакна май ВКП(б) Центральный Комитечĕн пропагандăпа агитаци Управленийĕ тата Хĕрлĕ Çарăн Политуправленийĕ партипе совет тата çар организацийĕсене Майăн 1-мĕшĕнче, ĕçсыннисене ĕçрен пăрас мар тесе, демонстрацисемпе парадсем ирттермелле мар тума сĕнеççĕ. Предприятисенче, учрежденисенче тата вĕренӳ заведенийĕсенче майăн 1-мĕшĕнче ĕçсыннисене çĕршыв оборонине тĕреклетме мобилизацилес лозунгпа митингсем ирттермелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн промышленность предприятийĕсене пама Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен ялавне тунă

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн промышленность предприятийĕсене памашкăн куçса çӳрекен ялав тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен ялавне производство планне тултарас ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнă тата рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем хушшинче массăллă-политикăллă, воспитанилле ĕçе кăтартуллăн йĕркеленĕ предприятисене ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомсем тата хула совечĕсемпе райсоветсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх параççĕ.

ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсене предприятисен коллективĕсенче çак постановление анлăн ăнлантарса парас ĕçе организацилеме тата предприятисен коллективĕсене Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен ялавне илессишĕн кĕрешме мобилизацилеме хушнă.

Çурхи шывпа юхакан йывăçсене тытасси çинчен

Кăçалхи апрелĕн 27-мĕшĕнче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çурхи шывпа юхакан йывăçсене тытасси çинчен постановлени йышăннă. Ун тăрăх Атăлпа Сăрă шывĕсем çинче юхакан йывăçсене тытма государственнăй тата кооперативнăй организацисене ирĕк панă. Йывăçсене тытас ĕçе Шыв-çул флочĕн Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем хăйсен вăйĕпе тата средствисемпе туса ирттереççĕ, тытнă йывăçсене хăйсем валли хăвараççĕ. Государственнăй тата кооперативнăй предприятисем тытнă йывăçсем те хăйсенчех юлаççĕ, анчах вăл йывăçсене уйăрса паракан фондсем шутне кĕртеççĕ. Çавăн пек фондсемсĕр предприятисем тытнă йывăçсенчен юрăхлисене йăлтах «Росснабсбытăн» Чăваш республикинчи отделенине памалла. Уйрăм çынсем тытнă йывăçсенчен юрăхлине пĕтĕмпех, вутă тумаллине çуррине «Росснабсбытăн» Чăваш республикинчи отделенине парас пулать.

Райсоветсен исполком председателĕсене Атăлпа Сăрă хĕрринчи колхозсенче йывăç тытакан бригадăсем тума хушнă. Тытнă йывăçăн кашни кубометрĕшĕн—ĕçре усă курма юрăхлă пулсан 12 тенкĕ, вутă тума каять пулсан 10 тенкĕ тӳлеççĕ.

Шкул ачисем ялхуçалăх ĕçĕнче активлăн ĕçлеме пулаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр). Партипе правительство «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстерессi çинчен» йышăннă постановленине районри шкулсенче вĕренекен ачасем, комсомолецсемпе пионерсем хĕрӳллĕн ырлаççĕ. Вĕсем çуллахи вăхăтра колхозсен уйхирĕсенче активлăн ĕçлеме пулаççĕ.

Мартăн 1-мĕшпе 15-мĕш хушшинче аслă классенче вĕренекен ачасем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренчĕç. Халĕ ялхуçалăх ĕçне вĕренесси вĕçленсе пынă май, Анат-Кăмашри вăтам шкулта вĕренекенсем «Хĕрлĕ сухаç», «Атăл», «Майăн 1-мĕш» колхозсене практикăна каяççĕ. Чăваш Улхашри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем «Хĕлхем» колхозра, Пояндайкинăри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем «Çĕнĕ пурнăç» колхозра практикăра пулаççĕ.

Çуллахи вăхăтра колхозра активлăн хутшăнса ĕçлеме шкулсенче вĕренекен ачасене халех бригадăсем çумне çирĕплетеççĕ. Тĕслĕхрен, Пояндайкинăри туллимар вăтам шкулта 7-мĕш класра вĕренекен ачасем Поклаков, Илдеменев вĕренекенсем сӳре сӳремелле, Игнатьева, Александрова, Васильева вĕренекенсем выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлемелле, Матвеева чăх-чĕп фермине ĕçлеме каять.

Тăрăшса ĕçлеççĕ

КУКЕÇ. «Красный флот» колхоз 1941 çулти тупăшпа ĕçкунĕсем тăрăх валеçес ĕçе вĕçлерĕ. Колхозниксем кăçал пысăк тупăш илеççĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне 3 килограмм тулăпа ыраш, 8 килограмм çĕрулмипе пахча-çимĕç тивет.

Сергей Парамонов колхозникăн çемьи иртнĕ çул 657 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Вĕсем çине вăл 60 пăт ыраш, 50 пăт тулă, 5 тонна çĕрулми илчĕ. Çавăн пекех Димитриева, Глухов тата ытти колхозниксем те çĕршер пăт тырăпа пахча-çимĕç илчĕç.

Çак кунсенче колхозниксемпе колхозницăсем ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен йышăннă постановление пуxăва пухăнса сӳтсе-яврĕç. Вăл постановление хĕрӳллĕн ырласа, колхозниксемпе колхозницăсем кăçал уйхирсенчи ĕçсене тата ăнăçлăрах туса пырса вăйлă тырпул илессишĕн вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеме пулчĕç.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Ютçĕршывсенче

Тĕнĕл держависен Иранри сăтăрла ĕçĕсене хирĕç

ТЕГЕРАН, апрелĕн 24-мĕш. (ТАСС). Иран правительстви çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: «Иран Совет Союзĕпе тата Великобританипе тунă договор тăрăх, çав çĕршывсем пирĕн союзниксем пулса тăраççĕ. Союзниксене хирĕçле, е тĕнĕл держависем майлă кирек мĕнле пропагандăна та, çавăн пекех тата тĕнĕл держависен подданнăйĕсене пытарса усранине те государство интересĕсене хирĕçле ĕç тесе шутлаççĕ. Çав постановление пăсакан çынсене питĕ хытă айăпламалла».

Германире çар промышленникĕсене арестлени

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 26-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паллă çынсем çапла калаççĕ: Гитлер Германири çар промышленноçĕн руководителĕсене производство планне пурнăçламаншăн арестлет. Нумаях пулмасть Гитлер Десаура авиацин Юнкерс завочĕн директорне Коппенберга арестлеме приказ панă. Завод ишĕлнипе самолетсен производствине ӳстерме мар, хальхин пек тытса пыма та май çук, теме хăйнă иккен çав директор.

Французсен генералĕ Германи тыткăнĕнчен тарнă

ЖЕНЕВА, апрелĕн 26-мĕш. (ТАСС). Французсен генералĕ Жиро Германи тыткăнĕнчен тарнă тесе Берлинри радио пĕлтернĕ. Жирона тарма пулăшнисене пурне те персе пăрахасси çинчен пĕлтернĕ. Жиро хăш тĕлте пытанса пурăннине кăтартакана 100.000 марка пама пулнă.

Лашасене кирлĕ пек пăхмаççĕ

ЕТĔРНЕ. Киров ячĕпе тăракан колхозра лашасене япăх пăхаççĕ. Аслă конюх Мартьянова юлташ лаша витисенче йĕркелĕх тăвассишĕн тăрăшмасть. Лашасем тăнă вырăнсенче витере çур метр хулăмĕш тислĕк йăтăнса выртать. 8 тиха кĕçĕ чирĕпе чирлеççĕ, вĕсене уйрăм пӳлĕмсенче тытса сыватас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман.

А. КРАСНОВ.

АТАЛ ТĂРĂХ ПАРОХОДСЕМ ÇӲРЕМЕ ПУÇЛАРĔÇ

Ĕнер Шупашкара Горькирен пассажирски пароход «Урицкий» çитрĕ, Шупашкартан тăвалла Горькие çитиччен пассажирски пароход «25 Октябрь» улăхса кайрĕ.

Пĕлтерӳ

Паян, апрелĕн 30-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Советсен Çуртĕн заседанисен залĕнче Шупашкар хулинчи парти, совет тата общественнăй организацисен представителĕсен Майăн 1-мĕш кунĕ ячĕпе ирттерекен чаплă ларăвĕ пулать.

ВКП(б) Хула комитечĕ.
Хула Совечĕн исполкомĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Чувашская контора Главкинопрокат в ближайшие дни выпускает на экраны республики новый звуковой художественный фильм
МАШЕНЬКА
Сценарий Е. Габрилович.
Постановка Лауреата Сталинской премии режиссера Ю. Райзман.
В роли Машеньки артистка В. Караваева.
Производство Московской ордена Ленина киностудии «Мосфильм».
Новый звуковой кинофильм-сказка
ВОЛШЕБНОЕ ЗЕРНО
Автор А. Симуков. Текст песни Я. Смолякова.
Режиссеры: В. Кадочников, Ф. Филиппов.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ĔÇÇЫННИСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ФРОНТРА

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, апрелĕн 27-мĕш. Май уявĕ ячĕпе хатĕрленĕ кучченеçсен эшелонĕпе пĕрле кайнă Чăваш республикинчи ĕçсыннисен делегацийĕ хăйне ертсе пыракан Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕпе З. А. Андреева юлташпа тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕпе А. М. Матвеев юлташпа пĕрле Хĕвеланăç фронтне çитрĕ. Делегацие Кирюхин, комиссар Лобачев тата Казаков юлташсем йышăнчĕç.

С. МАКАРОВ.
(Хамăр корр.).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 116 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 ст. м.